Чебоксары
Ц. Б. им. Горь...

1938 ФЕВРАЛЬ 22 ЫТЛАРИКУН
43 (4856)-мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

20-мӗш çул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗçтӑвкомӗн хаçачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактортӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Мухтавлӑ епопейӑна вӗçлесе çитернӗ

Тӗнчери культурӑн, тӗнчери прогресӑн историйӗ çине геройла çӗнӗ страницӑ çырӑнчӗ. „Çурçӗр польусӗ" станцин мухтавлӑ епопейине вӗçлесе çитернӗ. Куçса çӳрекен пӑр çинче тӑхӑр уйӑх ирттернӗ, унта хӗл каçнӑ 4 паттӑра пирӗн хӑйулӑ морйаксем пӑр çинчен илнӗ, халь вӗсем „Таймырпа" „Мурман" çинче.

Çулсем, вуншар çулсем иртӗç. Çурçӗр польусӗ çинче ӑслӑлӑх станцисем çулсеренех сӑнав-тӗпчев ӗçӗсене туса пырӗç, анчах Иван Папанинӑн, Ернст Кренкелӑн, Петр Ширшовӑн, Йевгений Федоровӑн мухтавлӑ паттӑр ӗçне етемлӗх ӗмӗр-ӗмӗрех мухтанӗ.

Куçса çӳрекен „Çурçӗр польусӗ" станци тунӑ геройла ӗç Арктикӑн вӗçӗ-хӗррисӗр анлӑ ирӗк вырӑнӗсем çинче совет çӗршывӗ нуç пулса тӑрассине татӑклӑнах çирӗплетсе хучӗ. Çурçӗр польусӗ халь те совет польусӗ тата малашне те совет польусех пулӗ!

Тӑватӑ геройӑн паттӑр ӗçне тӑван çӗршыва вӗçӗ-хӗррисӗр йуратни хавхалантарса çӗклепӗ. Арктикӑ пӑрӗсен хушшинче хӑйсем Сталин заданине пурнӑçа кӗртсе пынине вӗсем пӗлсе тӑнӑ. 1937 çулхи майӑн 24-мӗшӗнче партипе правителствӑ руководителӗсем Çурçӗр польусӗ çине експедиципе кайнисене чӗнсе калаçнине пичетлесе кӑларчӗç. Çак партипе правителствӑ чӗнсе калаçнинче Папанин тата унпа пӗрле пулнисем çак йӗркесене хумханулӑн вуланӑ: „Çурçӗр польусӗнче йулакан паттӑр хӗлкаçакансем Çурçӗр польусне вӗренес тӗлӗшпе хӑйсем çине хунӑ задачӑна чыслӑн пурнӑçа кӗртесе епӗр шанса тӑратпӑр". Çав кунах хаçатсем хӗлкаçакан 4 паттӑрӑн телеграммине пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл телеграммӑра çапла каланӑ: „Хамӑрӑн хӑватлӑ тӑван çӗршыв пире етемлӗх ӗмӗтне пурнӑçа кӗртес ӗçе шанса панипе епӗр телейлӗ, совет ӑслӑлӑхӗ мӗн май килнӗ таранах хаклӑ, тулли материалсем илтӗр тесе, мӗн тумалпне пӗтӗмпех тӑватпӑр".

Совет гражданинӗн сӑмахӗ ӗçӗнчен уйӑрӑлса каймасть. Хамӑр тӑван çӗршывӑн тӑватӑ паттӑр ывӑлӗ Çурçӗр польусне сӑнаса вӗренес тӗлӗшпе хӑйсем çине партипе правителствӑ хунӑ задачӑна чыслӑн пурнӑçа кӗртрӗç.

Совет гражданинӗшӗн партипе, правителствӑ заданине, Сталин йулташ заданине пурнӑçа кӗртессинчен пысӑкрах хаваслӑхпа чыс урӑх çук. Польарта хӗл каçнӑ 4 паттӑр хӑйсен тӑван çӗршывӗн чысӗшӗн, мухтавӗшӗн кӗрешрӗç. Çакна ӑс-тӑнра, чӗрере тытса тӑни пумай уйӑха тӑсӑлнӑ каçӑн сӗм тӗттӗмлӗхӗнче, ӗмӗрхи пӑрсен патшалӑхӗнче вӗсене хавхалантарса, çӗклентерсе тӑнӑ. Партипе правителствӑ руководителӗсем сывлӑх суннисем—польусра хӗлкаçнӑ паттӑрсене хӑйсем тунӑ чаплӑ ӗçӗшӗн тивӗçлипе тивекен наградӑ.

Куçса çӳрекен пӑр çинче 4 герой пулнӑ: Совет Сойузӗн Геройӗ Иван Папанин — станци начальникӗ, граждан вӑрçине паттӑрӑн хутшӑнса çапаçнӑскер; Петр Ширшов—гидролог, ывӑнма пӗлми учонай; Ернст Кренкел—нимӗнрен хӑраман, хаваслӑ, Челюскин епопейинче тӗнчипе паллӑ чап кӗрешсе илнӗ радист; Йевгений Федоров—астроном-магнитолог. Вӗсен йачӗсене, вӗсен пурнӑçӗ çинчен çырнисене, вӗсен портречӗсене, пӗтӗм çӗршыв пӗлсе тӑрать. 1937 çулхи асра тӑракан кун—декабӗрӗн 12-мӗшӗнче совет халӑхӗ вӗсене хӑй йуратнине, хисепленине тата шанса тӑнине кӑтартса панӗ, вӗсене тӑватӑшне шурне те ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйларӗ.

Пӑр çинче вӗсем тӑваттӑн пулнӑ. Анчах кирлӗ пулсассӑн,—аслӑ совет халӑхӗ хӑй рочӗсенчен ун пек геройсене пиншерӗн кӑларнӑ пулӗччӗ. Тӑван çӗршыва, хӑйӗн тӑван большевикла партине, Сталин йулташа вӗçӗ-хӗррисӗр йуратни, — çак туйӑмсем ӗнтӗ хамӑр тӑван çӗршывӑн ывӑлӗсемпе хӗрӗсене хӑйулӑхпа паттӑрлӑха аслӑн палӑртмашкӑн çунатлантарса çӗклеççӗ. Совет Сойузӗн таса чиккисем çине алӑ çӗклеме хӑйсассӑн, пирӗн тӑван çӗршыв тӑшманӗсен çавна ӗнтӗ курса ӗненмелех пулать.

„Çурçӗр польусӗ" станци ӑçтала, мӗнле куçса пынине пӗтӗм çӗршыв, хамӑрӑн пӗтӗм халӑх калама çук пысӑк тимлӗхпе сӑнаса тӑчӗç. Çурçӗр полушари карттипе çинчи тӳрӗ мар, кукӑр-макӑр лини çине —„Çурçӗр польусӗ" станци куçса пынӑ çула кӑтартса паракан йӗр çине—пӗтӗм малта пыракан тата прогрессивлӑ етемлӗх куç илмесӗр пӑхса тӑчӗ.

Пулашки ернесенче, Гренланди тинӗсне куçса пыракан пӑрсене хайар шторм çӗмӗрме, ватма пуçланӑ вӑхӑтра, пирӗнтен кашнийех Папанин пурнӑçӗпе, унӑн виçӗ йулташӗн пурнӑçӗпе пурӑннӑ. Пирӗн чӗресем штормсемпе çилтӑвӑл витӗр Гренланди пӑрӗсем патнелле çӗмӗрсе пыракан совет пӑрçӗмӗренӗсен — „Таймыр" тата „Мурман" карапсен машинисемпе пӗр кӗвӗллӗн тапса тӑчӗç. Совет морйакӗсем—пӑлханса, урса кайнӑ тинӗс вӑйне çӗнтерчӗç.

Гренланди тинӗсӗн пӑрӗсем хушшинче февралӗн 19-мӗшӗнче пулса иртнӗ калама çук чаплӑ митинг—пирӗн совет çӗршывӗ Арктикӑна кӗрешсе илес тӗлӗшпе туса пынӑ кӗрешӳ историнчи мит те пысӑк тапхӑр пулнӑ. Польар станцине усçипе паллӑ тӑвас йатпа Çурçӗр польусӗнче, ийунӗн 6-мӗшӗнче пулса иртнӗ митинга аса илмесӗр хӑварма йурамасть, вӑл митингра паттӑр хӗлкаçакансемпе, учонайсемпе тата тӗпчевçӗсемпе ретӗп льотчиксем—тӑван çӗршывӑмӑрӑн мухтавлӑ соколӗсем уткӑнӗ пулнӑ. Февралӗн 19-мӗшӗнче пулса иртнӗ митингра льотчиксен вырӑнне морйаксем йышӑнчӗç. Совет Сойузӗ Арктикӑна кӗрешсе илес тӗлӗшпе тунӑ кӗрешӳре вӑл льотчиксене те, морйаксене те тивӗçлипех пысӑк та паллӑ вырӑн тивет.

Тӑватӑ хӗлкаçакана пӑр çинчен илнӗ „Таймырпа" „Мурман" морйакӗсен йалтӑраса тӑракан, пысӑк ӑсталӑхлӑ ӗçӗ— совет тинӗс флочӗ çӗнӗ çӗнтерӳсем тӑвассине шантарса тӑракан факт. Совет халӑхӗ тӑвакан хӑватлӑ тинӗс флочӗ тинӗссен пысӑк талкӑшӗсем çинче хуçа пулса тӑрӗ.

Куçса çӳрекен „Çурçӗр польусӗ" станцин мухтавлӑ епопейи совет тӑван çӗршывӗн пумай йенлӗ те пуйан пурнӑçӗнчи чи чаплӑ епизодсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Паттӑрлӑхӑн тата тӑван çӗршыва йуратнин çавӑн пек примерӗсем—Папанин, Ширшов, Кренкел тата Федоров кӑтартнӑ пек примерӗсем çинче пирӗн пӗтӗм халӑх воспитани илет.

„Çурçӗр польусӗ" станци хӑйӗн тивӗçлӗхне пурнӑçа кӗртрӗ, хӑйӗн ӗçне туса ситерчӗ. Сывӑ пулччӑр хӑйсене ӗмӗр тӗксӗмленми мухтавпа витнӗ паттӑр хӗлкаçакансем!

Сывӑ пулччӑр паттӑр совет морйакӗсем, тинӗссемпе океансене çӗнтерекенсем!

Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе çавӑн пек геройсене пӑхса воспитани парса ӳстерекен аслӑ вырӑс халӑхне — чап та мухтав!

(„Правда" умстатйи).

Тӑван çӗршывӑн паттӑр ывӑлӗсене хӗрӳлӗ салам!

Куçса çӳрекен „Çурçӗр польусӗ" станцин паттӑрӗсем: Совет Сойузӗн Геройӗ И. Д. Папанин йулташ, Е. Т. Кренкел, Е. К. Федоров, П. П. Ширшов йулташсем

Мускав, Кремль.

Пирӗн тӑван, йуратнӑ
СТАЛИН йулташа.
Совет правителстви пуçлӑхне
МОЛОТОВ йулташа

Пайан епӗр, пирӗн тӑван совет правителстви мӗн пур ӗççыннисен тусӗ тата çулпуçӗ Сталин йулташ тӑрӑшнипе тата тимлӗн çавӑрӑнса пӑхнипе Çурçӗр польусне çӗнсе илекен тӑватӑ шиксӗр паттӑр çынна куçса çӳрекен „Çурçӗр польусӗ" польар станцинчен илсе карапсем çине лартнӑ хыпара пӗлтӗмӗр. Халь вӗсем Пысӑк Çӗр çине килекен „Таймыр" тата „Мурман" пӑрçӗмӗренсем çинче пӗр хӑрушлӑхсӑр пыраççӗ.

Хӑйӗн шанчӑклӑ ывӑлӗсене—хайар Арктикӑна çӗнсе илекенсене часах ак пӗтӗм çӗршыв кӗтсе илсе ӑшшӑн йуратса алтытӗ. Хамӑрӑн хӗрӳлӗн йуратнӑ ывӑлӑмӑра тата тӑванамӑра—Ивана курса ыталас кун часах çитӗ. Хамӑр мӗнле хавасланнипе тав тунине каласа пама сӑмах тупаймастпӑр. Советсен çӗршывӗнче çеç çыншӑн çавӑн пек тӑрӑшма пултараççӗ. Çак вӑл Сталинла тӑрӑшни пулать, Сталин çыншӑн тӑрӑшни паттӑр польарниксен чӗрисене чӗрӗ вӑй парса çӗклентерет, Сталинла заданине пурнӑçа кӗртес ирӗк-кӑмӑла çирӗплетет.

Пирӗн ывӑлпа тӑванӑн тата унӑн тусӗсен пурнӑçӗшӗн епӗр нихаçан та шикленмен. Йавӑр минута килсе тухсан вӗсене пулӑшма çӗршер совет çыннисем сиксе тарассине, вӗсене пӗтӗм совет çӗршывӗ çӑлса хӑварассине епӗр пӗлсе тӑнӑ. Аслӑ Сталин мухтавлӑ хӗлкаçакансене çӑлма мӗн пур хатӗрсене, мӗн пур вӑйа йачӗ.

Хӗрӳлӗ тавтапуç Сире, пирӗн тӑван йуратнӑ Сталин йулташ пирӗн тӑван çӗршыври кашни çыншӑн тӑрӑшнӑшӑн.

Д. Н. Папанин
И. Д. Папанин.
А. Д. Папанин.
К. Д. Лизунова.

Мускав, Кремль.

Сталин йулташа

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

Халь çеç епӗр тӑватӑ паттӑра-папанинцӑсене, вӗсен хушшинче пирӗн ывал та пур, пӑр çинчен илнине пӗлтӗмӗр. Çак пӗлтерӳ пирки епӗр, ашшӗ-амӑшӗ хӑй ывӑлӗшӗн, совет çӗршывӗн гражданӗсем хамӑр тӑван çӗршывӑмӑрӑн мухтавлӑ, хӑйсене панӑ заданине пӗр шикленмесӗр пурнӑçа кӗртнӗ ывӑлӗсемшӗн савӑннӑ пек, вӗçемсӗр савӑнатпӑр.

Ашшӗ-амӑшӗсенчен пысӑк спасибӑ Сире, пирен тӑван Иосиф Виссарионович, спасибӑ Сире пирӗн ывӑлӑмӑра панӑ пысӑк чысшӑн, Есӗр хӑйулӑ папанинцасем пирки ӑшшӑн та тимлӗн тӑрашнӑшӑн. Вӑл тӑрӑшу пайан çав тери анаçла вӗçленчӗ. Пирӗн Йевгений партипе совет правителстви пӗрре ыйтсассӑнах, хамӑр тӑван çӗршыв мухтавӗшӗн тума хушнӑ кирек мӗнле ӗçе те пурнӑçа кӗртесре епӗр шанса тӑратпӑр.

Федоровсем—Собина Акимовнӑпа Константин Николайевич.

„Пирӗн пурнӑçпа ӗççем тӑван çӗршыва тивӗçлӗ"

„Таймыр" 20-II.38 ç.

Сталин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Микойан, Чубарь, Андрейев, Косиор, Жданов, Ейхе, Йежов, Петровский, Хрушчев йулташсене

Хаклӑ, таван йултащсем!

Сирӗн саламласа çырнине Гренланди çыранӗсем патӗнче, ӗмӗрхи пӑрсем хушшинче илсе вуласан, хамӑр мӗнле хумханнине çынан йаланхи пек ахаль сӑмахӗсемпе каласа пама хӗн. Епӗр, Есӗр хушнисене пурнӑçа кӗртсе, çавна кашни совет гражданинӗ тума пултарнине çеç турӑмар. Пирӗн пурнӑçпа ӗççем—икӗ карап çинчи екипажсен пурнӑçӗпе ӗçӗсем,—тӑван çӗршыва тивӗçлӗ. Пирӗн большевикла партин, совет правителствин заданине пурнӑça кӗртнинчен ытла урӑх савӑнаç çук.

Карапсем çинчи екипажсем хушшипе Есӗр панӑ кирек мӗнле заданине те пурнӑçа кӗртме пӗтӗмӗшпех хатӗр пулни çинчен пӗлтеретпӗр. Пирӗн хисеплӗ пассажирсем—Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров хӑйсене лайӑх туйаççӗ. Польарти „Çурçӗр польусӗ" станцине пер винтӑ йулмиччченех карап çине вырнаçтарнӑ.

Остальцев,
Котцов,
Барсуков.

Норвеги посланникӗн саламӗ

Норвеги посланникӗ г. Урби Йутçӗршыв ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ В. П Потемкин йулташ патне пырса правителствӑна, çӗршыва, ССР Сойузӗн халӑхне тата пуринчен ытла папанинцӑсене пӑр çинчен илнӗ ӗçре паларнӑ морйаксене сывлӑх сунса салам каланӑ.

(ТАСС)

Сталин пӑхса ӳстернӗ паттӑрсене—Папанин, Кренкел, Федоров, Ширшов йулташсене большевикла салам!

Хамӑрӑн тӑван çӗршывӑмӑрӑн мухтавлӑ ывӑлӗсене, Сталин пахса ӳстернӗ паттӑрсене, Арктикана кӗрешсе илес ӗçре пӗтӗм етемлӗхшӗн пӗтӗм тӗнчипе историлӗ калама çук пысӑк çитӗнӳсем тунӑскерсене, совет халӑхӗн паттӑрлӑхне ӑшра тытса тӑракан, хӑйсене ӗмӗр тӗксӗмленми чаппа витнӗ геройсене оборонӑ промышленнӑçӗнчи работникӗсен коллективӗ хӗрӳлӗ, большевикла салам йарать.

Оборонӑ промышленнӑç Халӑх Комиссарӗ
М. Каганович.

Çакӑн пек геройсем çуратса ӳстерекен халӑх аслӑ, ӑна никам та çӗнтерес çук

„Мурман" тата „Таймыр" пӑрçӗмӗренсем çинчи експедицире пулнӑ, хӑйсене шеллемесӗр кӗрешекен çынсем Артикӑна кӗрешсе илес, етем çутçанталӑка пӑхӑнтарас тӗлӗшпе тӑвакан ӗç историйӗн çӗнӗ главине çырса çитерчӗç. Папанин, Кренкел, Ширшов тата Федоров йулташсем совет карапӗсем çинче, вӗсем халь тӑван çӗршыва килеççӗ.

Çак хыпар мана уйрӑмах хытӑ савӑнтарчӗ, мӗншӗн тесен мана Арктикӑра вӗçмешкӗн пӗрре çеç мар тӗл килнӗ, куçса çӳрекен пӑр çинче ӑслӑлӑх тӗпчевне туса пымашкӑн шиксӗр папанинцасен мӗн чухлӗ вӑй хумала пулнине епӗ пит лайӑх пӗлетӗп. Епӗ вӗсен историре халиччен пулман чаплӑ ӗçӗпе телӗнсе савӑнатӑп, çак телейлӗ кун хаклӑ тусӑмсене хӗрӳлӗн сывлӑх сунатӑп.

Папанинцӑсем пек геройсене çуратса кӑларакан халӑх аслӑ, вӑл халӑха никам çӗнтерес çук. Совет польарникӗсен калама çук чаплӑ епопейи Сталин йулташ тата хамӑрӑн социалисӑмлӑ çӗршыв мӗн тери тӗлӗнмеле геройсем ӳстерсе çитӗнтернине кӑтартса парать. Çак тӑшмансем пӗлсе тӑччӑр: фашисла палачсем пирӗн аслӑ халӑха хирӗç сӑна çӗклеме шухӑш тытсан, Совет Сойузӗнчи ӗççыннисем хӑйсен геройлӑхне нумай ӳстерӗç.

Хаклӑ, пирӗншӗн пуриншӗн те вӗçӗмсӗр хаклӑ, хӑйулӑ польар тӗпчевçи-сӑнавçисене — Папанин Кренкел, Ширшов, Федоров йулташсене саламлатӑп.

Совет Сойузӗн Геройӗ
В. Молоков.

Геройсен йачӗсене пӗтӗм тӗнче калать

Каллех совет геройӗсен йатне пӗтӗм тӗнче калать. Аслӑ Советӑн тӑватӑ депутачӗ—Иван Дмитрийевич Папанин, Ернст Теодорович Кренкел, Петр Петрович Ширшов, Йевгений Константинович Федоров—ӑслӑлӑх тӗпчевӗсен халиччен пулман çулне вӗçлесе çитерчӗç, вӗсем пӑр катӑкӗсем çинче тахçан ӗлӗк вӑрттӑнлӑхлӑ пулнӑ Çурçӗр польусӗ патӗнчен Гренландин чулсӑрчӗсем патне çитиччен ишсе тухрӗç; унта совет геройӗсене çутçанталӑк хӑруша çапӑçува чӗнсе кӑларчӗ, çав çапӑçуран вӗсем çӗнтерсе тухрӗç.

„Таймырӑн", „Мурманӑн" тата „Мурманецӑн шиксӗр командисемпе льотчикӗсем пӑрсемпе тӑвӑлсем витӗр хӑйулӑ учонайсене пулӑшма тухса кайрӗç. Совет соколӗсем йурлӑ çилтӑманра, çӗмӗрлекен пӑрсем тӗлӗпе йавӑнса çӳресе, лагере шыраса тупрӗç.

Шиксӗр геройсен халиччен нихçан та пулман çирӗп тӳсӗмлӗхне саламлатпӑр. Весем коммунисӑм çулӗ—ӑслӑлӑх паттӑрлӑхӗпе мухтавӑн çулӗ иккенне етемлӗхе татах та татах тепӗр хут кӑтартса параççӗ.

Хаклӑ йултащсем, Сирӗнпе тӑван çӗршывӑмӑрта тӗл пуласса тӳсме çук кӗтетпӗр.

Алексей Толстой.

Пӗтӗм тӗнче папанинцӑсене алӑ çупса саламлать

Тӗнчери пичет герой—папанинцӑсем çинчен

Пӗтӗм тӗнчери хаçатсем паттӑрла папанинцӑсене куçса çӳрекен пӑр çинчен илсе тухни çине пысӑккӑн çавӑрӑнса пӑхаççӗ. Чылай хаçатсем папанинцӑсене пӑр çинчен илсе тухни çинчен пӗлтернисене, вӗсен сӑнӗсене пичетлесе кӑларнӑ. Çаван пекех хаçатсем папанинцӑсем пӑр çинче пурӑннине кӑтартакан фотоӳкерчӗкесене пичетлесе кӑларнӑ. Весем епопейӑна вӗçлесе çитернӗ йатпа йатарласа статйасем çырса пичетлеççӗ.

Америкӑри тата Англири пӗтӗм пичет, ӑслӑлӑх деятелӗсем, тӗпчевçӗсем, авиаци работникӗсем Советӑн тӑватӑ геройӗн—Папанинӑн, Ширшовӑн, Кренкелӗн тата Федоровӑн ӑслӑлӑх тӗлӗшпе тунӑ çитенӳсене пысӑка хурса хаклаççӗ.

Совет учонайӗсем тунӑ хӑйулӑ ӗç тӗнчере халиччен пулман ӗç пулса тӑрать,—тесе çырать Англин «Сендей Таймс» хаçачӗ.

Америкӑри чи пысӑк хаçат «Нью-Йорк Таймс» çапла кӑтартса çырать: Совет Сойузӗ Арктикӑна пӑхӑнтарас ӗçе организацилӗхпе туса пырать. Хӑйулӑ папанинцӑсем темиçе уйӑх хушшинче нумай çулсем хушши кайала Арктикӑна тӗпчесе вӗренекенсем тунинчен чылай Арктика çинчен етемлӗх пӗлӳне пуйанлатрӗç.

Англин «Таймс» хаçачӗ çапла пӗлтерет: Папанин тата унӑн йултащӗсем Арктикӑна тӗпчесе вӗренес ӗçре пысӑк хӑйулӑх кӑтартрӗç. Пӗтӗм тӗнчери учонайсем вӗсем тӗпчесе вӗреннӗ ӗçсен резултачӗсене хыттӑн кӗтеççӗ. Папанинцӑсем етемлӗх çутçанталӑкпа паттӑррӑн кӗрешнин историнче чаплӑ страницӑсем çырса хучӗç.

Сљот пухăниччен 1937 çулхи тырпулсене кашни колхозрах валеççе пĕтермеле

Колхозсенче 1937 çулхи тырпулсене тата тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пĕтермелли сруксем тахçанах иртсе кайнă. Çапла пулсан та, çав ĕçе вĕçлесе çитермен районсем хаљ те пур. Февралĕн 15-мĕшне Йелчĕк районĕнче 20 колхозра, Трак районĕнче 10 колхозра тырпулсене валеççе пĕтермен. Тырпулăсене валеçмели ведăмăç туса çирĕплетнĕ пулсан та чылай колхозсенче тырпулсене валеççе пĕтермен. Кун пек колхозсем кашни районтах тупăнаççĕ.

Акă, Ыхра-кассинчи Киров йачĕпе тăракан колхозра (Ишлей р.) тырпулсене валеçмели ведăмăçа дек бĕр уйăхĕнчех туса çирĕплетнĕ пулнă. Пĕтĕм сăлтав завхоз А. Скрипкин „вăхăт“ тупайманнинче тăрат, тесе пĕлтерет йалкор Никифоров йулташ.

Пикшикри „Луга“ колхозра (Шупашкар р.) колхозниксем ĕçкунĕ пуçне мĕн чухлĕ тырă тивесси çинчен çеç мар, 1937 çулта миçе ĕçкунĕ туни çинчен те тĕрĕс пĕлмеççĕ, тесе пĕлтерет тата И. Илларионов колхозник. Чылай колхозниксен ĕçкунĕсем çухалса пĕтнĕ.

Канаш районĕнчи „Хĕрлĕ хĕм“ колхозра та ĕçкунĕсене йĕркелĕ шугласа çитереймен. Кунта та çавăн пирки тырпулсене валеçес ĕçе хаљ те пĕтереймен.

Мăн-Сĕнтĕр йалсоветне кĕрекен „Мартăн 8-мĕш“ колхозра (Тутаркас р.) тырпулсене валеçнĕ пек тунă, анчах ку ĕçе йĕркелĕ туман пирки 8 тоннă тырă ытлашши салатса йанă. Хаљ колхоз вăрлăхсăрах лăрат.

Çак тĕслĕхсем пурте районсенчи организацисем, чи малтанах çĕрĕç пайĕпе машинă трактор станци руководителĕсем колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене валеçес ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхманнине кăтартса параççĕ.

Колхозсенче тырпулсене валеçесси хуçалăхла-политикăла пысăк ĕç. Вăл ĕç çуракине хатĕрленес ĕçпе тачăн çыханса тăрат. Çавна çĕрĕç оргăнĕсен лайăххăн ăнланса илмеле, тырпулсене валеççе пĕтермен колхозсене тивĕçлĕ пулăшу парса, çав ĕçе халех вĕçлесе пĕтермеле.

М. К.

Сљота хатĕрленеççĕ

ВĂРНАР. Районра малта пыракан колхозсем çуракине пур йенсен те тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Колхозсем хаљ йалхуçалăхĕнче малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сљочĕ уçăлнă тĕле пысăк çитĕнÿсемпе пырассишĕн ăмăрту пуçласа йачĕç.

Кољцовкăри Сталин йачĕпе тăракан, Зеленовкăри Ленин йачĕпе тата Булатăвăри Молотов йачĕпе тăракан колхозсем çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ. Ку колхозсенче акмалли вăрлăхсене пĕтĕмпех 3—4-шар хут тĕрлĕрен машинасемпе суртланă, чылайĕшне пĕрчĕн-пĕрчĕн алăпа суйланă. Йалхуçалăх машинисемпе ĕçхатĕрсене йусаса лартнă.

Çавнашкалах ку колхозсем хыççăн Мамалайри Ворошилов йачĕпе тăракан, Хирпусĕнчи „Çĕнтерÿ“, Елмен Сунарти Каганович йачĕпе тăракан, Малтикасри „Пĕрлешÿ“ колхозсем те çуракине хатĕрленсе çитрĕç.

Çакăнпа пĕрлех районра çуракине хатĕрленес тата вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре кайа йулса пыракан колхозсем те пур-ха. Пĕргас, Мăн Турхан, Уйкас Йавăш, Катăш, Сăкăт, Утар, Пĕвайаљ колхозĕсем вăрлăхсене суртласа, йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтермен.

Е. Волков.

„Комсомолец“ колхоз „Пĕрлешÿ“ колхозпа ăмăртат

Уйкасри „Комсомолец“ колхозăн (Вăрнар р.) пĕрремĕш кварталта 342 кубла метр вăрман хатĕрлемелле, 286 кубла метр турттармала. Пайанхи куна вăрман хатĕрлес плана 70 процент, турттарассине 113 процент ытла тултарнă.

Вăрманта уйрăмăнах Никифор Алексейев, Семен Григорйев, Анисим Алексейев, Дмитрий Архипов, Павлов йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи ĕç нормисене 125—150 процент таран тултарса пыраççĕ. Колхоз председателĕ Михайлов йулташ колхозниксене кулленхи ĕçре йертсе пырат.

„Комсомолец“ колхоз вăрман хатĕрлев планне срукчен тултарассишĕн Малтикасри „Пĕрлешÿ“ колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Н. Козлов.

Республикăри колхозсем тăрăх

Иетĕрне районĕнчи „Çĕнĕ çул“ колхоз Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитме тăрăшат. Колхоз пайан куна çĕре çемçетмелли имçамсенне хатĕрлемелли плана тултарнă. Калчасене апат пама тислĕк шĕвекĕ хатĕрлеме 140-шар витре кĕрекен икĕ катка туса хунă.

Й. Прокопйев.

Шемшерти „Заря“ колхоз (Шупашкар районĕ) 1937 çулхи тырпулсене кашни ĕçкунĕ пуçне 10-шар килограм валеçнĕ. Колхоз кăçал татах та вăйлă тырпулшăн тăрăшат. Пайан куна илсен, вăрлăхсене йалхуçалăх машинисене хатĕрлесе хунă. Çавăн пекех çĕре çемçетмелисене те хатĕрлесе çитернĕ.

В. Захаров.

Елĕк районĕнчи Матăк колхозĕпе Вăрманкас колхозĕ пĕр-пĕрипе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Çав ăмăртура мала тухас тĕлĕшпе хаљ çак колхозсенчи бригадăсем çуракине хатĕрленсе çитме тăрăшаççĕ. Хаљ уйрăмăнах çĕре çемçетмели йапаласене хатĕрлес ĕç лайăх пырат.

А. Ландышев.

Колхозсен çулталăкри отчочĕсене туса пĕтермен

КАНАШ. ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх колхозсен çулталăкри отчочĕсене 1938 çулхи февралĕн 1-мĕшне туса çитерсе, ăна февралĕн 8-мĕшĕнчен кайа йулмасăр колхозниксен аслă пухувĕсенче çирĕплетсе февралĕн 10-мĕшне çĕрĕç пайне тăратмала пулнă. Анчах, Канашсем çак кăтартува пурнăçлаймарĕç. Февралĕн 15-мĕшне çитсе те районри 47 колхозран 13 колхозра çеç çулталăк отчочĕсене туса çитернĕ. 31 колхоз хăйсен отчочĕсене райçĕрĕç пайне пырса тĕрĕслеттернĕ, ытти колхозсем çулталăкри отчот тăвас ĕçе шутламан та. Уйрăмăнах Майакри „Çĕнĕ пурнăç“, Кив Шелтемри Сталин, Кармаминчи Чапайев, Йанкăлчăри Каганович йачĕпе тăракан колхозсенче çулталăк отчотне тума тытăнман та. Сиккассинчи Шмидт йачĕпе тăракан, Çĕнĕ Шуртанри „Малала“ колхозсенче отчот тăвас ĕçе тытăннă пулсан та, васкаса ĕçлемеççĕ. Çĕнĕ Шуртанри „Малала“ колхозăн счетовочĕ Филиппов ĕçлес вăхăта ĕçсе çÿресе иртерет.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем отчотсем тăвас ĕç кăтартнă срукран та кайа йулнине аван пĕлеççĕ пулсан та, колхозсене отчотсем тăвас çĕрте çителĕклĕ таран пулăшу памаççĕ.

В. Василйев.

Ăнланса илмен пирки

ТРАК. Уйкас Йунтапа йалсоветĕ çумĕнчи уй-хир секцинче 5 çын тăрат. Секцине Чудаков йертсе пырат. Ку секцин колхозсемпе йединоличниксене çуракине хатĕрленес ĕçре йертсе пымала. Çекци çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăйĕн членĕсемпе те пухăнса калаçман, колхозниксене çуракине хатĕрленме пулăшмаст.

Финанс секцине Шумилов (йалсовет секретарĕ) йертсе пырат. Секцинче 13 член. Секци укçатенкĕ пухассипе начар ĕçлет. Çакна пула та 4-мĕш кварталта укçа тенкĕ пухас плана 67 процент кăна тултарнă. Вăл шутран займ укçине—19,6 проц., самообложени—8 проц çеç пухнă.

Выљăх-чĕрлĕх секцийĕ те начар ĕçлет. 1937 çулта 360 пуç ытла пулмалла хăлĕ 323 пуç çеç йулнă, çавăн пекех, ĕне выљăх хисепĕ те 735 пуçран 581 пуçа çити чакнă.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче ĕççыннисен политикăла активлăхĕ çÿле çĕкленчĕ. Йалсоветсен суйлавра палăрнă активпа пысăккăн усă курмала, вĕсене секцисен ĕçне хутшантармала.

Арх. Краснов.
Мак. Иванов.

ССР Сойуз Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссарĕ П. СМИРНОВ.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илессишĕн кĕрешеççĕ

Çĕрпÿ районĕнчи „Ĕмĕт“ колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Тырпул тухăçлăхĕ йенĕпе районра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Вăтам хисеппе кашни гектар пуçне 21-шер центнер пăтне тĕштырă туса илнĕ. Уйрăм бригадăсем кашни гектартан вăтам хисеппе 22-шер центнер таран тĕштырă туса илнĕ.

„Ĕмĕт“ колхоз членĕсем кăçалхи çул вăтам хисеппе кашни гектартан 150-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн „Пионер“ колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухнă. Çĕре çемçетмели йапаласем хатĕрлеççĕ. Йалхуçалăх машинĕсене йусаса пĕтернĕ, вăрлăхсене суртласа тасатнă, суртсăр вăрлăхсене суртлисемпе улăштарса çитернĕ. Халĕ колхозниксем агротехникă ĕçĕсене вĕренеççĕ.

Колхоз членĕсем пур ĕçсене те Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илессишĕн кĕрешÿпе çыхăнтарса пынă. Иртнĕ çулта туса илнĕ тырпултан експонатсем хатĕрленĕ. Выставкăна тăратма ырăш, сĕлĕ, тулă експоначĕсене пухнă. Вĕсене колхозри опытник Н. Иванов типтерлĕ пăхса усрат.

„Ĕмĕт“ колхоз выставкăра вăйлă тырпулшăн йеплер кĕрешнипе кăтартнисĕр пуçне тата колхозри сĕт-çу фермин çитĕнÿсене кăтартасшăн. Сĕт-çу ферми 1932 çултанпа ĕçлет. Çак хушăра фермăри ĕнесен ăратлăхне лайăхлатса, вĕсенчен ытларах тупăш илес, фермăри выљăхсем ваљљи вите-суртсем тăвас йенĕпе чылайах пысăк çитĕнÿсем тунă. Хаљхи вăхăтра Анатри Кипекçĕри „Ĕмĕт“ колхозăн сĕт-çу фермийĕ районра лайăх ĕçлекен фермăсенчен пĕри пулса тăрат.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государствă планне çулсеренех ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. 1938 çулхи плана та тултарнă ĕнтĕ. Хаљхи вăхăтра фермăра 123 пуç ĕне выљăх; вĕсенчен сăвакан ĕнесем 40 пуç, икĕ çулхи пăрусем 28 пуç, çулталăка çитнĕ пăрусем 26 пуç, кăçалхи çамрăк пăрусем 26 пуç. Фермăра пĕр йăхлă (Красногорбатовски) вăкăрсем — 3 пуç пур.

1937 çулта кĕркунне „Ĕмĕт“ колхоз районра çук чаплă тељатник туса лартрĕ. Ку тељатнике зоотехникă кăтартнă тăрăх тунă. Унта икĕ кăмака, витере йалан 10—12 градус ăшă тăратаççĕ. Çавăнта ĕнтĕ кăçалхи çамрăк пăрусем çитĕнеççĕ. Вĕсене К. Чернова колхозницă пăхат. Вăл тăрăшса пăхнипе кăçалхи çамрăк пăрусем талăкне 650-шер грам хутшăнса пыраççĕ. „Чига“, „Нонка“, „Красотка“ пăрусем 900-шер грам хутшăнаççĕ.

Фермăри ĕнесем сĕт парассипе те ÿссе пырат. Акă иртнĕ çулта „Красунька“ йатлă ĕне 2.147 литр, „Клавдия“, „Ӳлга“ йатлă ĕнесем 2 пиншер литр сĕт панă. Çак ĕнесене ĕнтĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине йама палăртнă. Кусемсĕр пуçне „Трактор“, „Легендарный“ йатлă вăкăрсем те выставкăна каймалли кандидатсем. „Трактор“ вăкăр 6 çулта, вăл 650 килограм туртат. „Легендарный“ 2 çулта çеç-ха, вăл та 430 килограм туртат. Çаксем икĕш те красногорбатовскисем. Тата выставкăна 2 пăру йарасшăн. Вĕсем икĕш те иртнĕ çулхи пăрусем. Районран пырса хакланă тăрăх, „Ĕмĕт“ колхозăн фермин пăрусем пекки лайăххи ытти колхозсенче урăх çук.

Иртнĕ çулта фермăри ĕнесенчен государствăна 16.840 литр сĕт панă. Ку шутран пĕлтĕр колхозниксен хăйсен ĕнисемшĕн государствăна памалли сĕт хисепне 4.320 литр кĕртнĕ. Кăçалхи çулшăн пĕрремĕш кварталти государствăна сĕт памалли плана та ытлашшипех тултарнă.

Фермă çулсеренех колхоза пысăк тупăш парса тăрат. 1936 çулта фермăран 11.963 тенкĕлĕх тупăш илнĕ пулсан, 1937-мĕш çулта пурĕ 17.503 тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Кăçал сĕт-çу фермипе 25 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă.

Сĕт-çу фермипе 12 çын ĕçлет. Вĕсем кашнийех пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура А. Йефимова, И. Данилова колхозницăсем малти ĕретре пыраççĕ. Вĕсем ĕнесенчен сĕт-суса илес тĕлĕшпе пысăк тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ.

Кăçал колхоз Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма заявлени пачĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем выставкă уçăлнипе пысăк çитĕнÿсемпе тата вăйлă тырпул туса илнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Сĕт-çу ферми кăтартулă ĕçленине курса, районри ытти колхозсенчи фермăсенче ĕçлекенсем фермăна екскурсине пыма хатĕрленеççĕ. „Ĕмĕт“ колхоз членĕсем хăйсен паха опычĕсене ытти колхозсене пама йалан хатĕр.

Гр. Калинин.

Çитĕннисен заочнă вĕренмели шкулĕн ĕçĕ

Хаљхи вăхăтра ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи çитĕннисен заочнă вĕренмели вăтам шкул çумĕнче V-мĕшпе VIII-мĕш классем ĕçлеççĕ. Вĕсенче пурĕ 717 çын заочнă вĕренет.

Февралĕн 13-мĕшне Çĕрпÿ, Трак, Шăхасан районĕсенче (Çĕрпÿре, Тракра, Именкассинче, Чурачăкра, Шăхасанта тата Кĕçĕн Кибечре) консулљтаци пункчĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. Консулљтаци пункчĕсем заочниксене программăри ыйтусене пурнăçлас ĕçре пысăк пулăшу пама пултараççĕ; заочниксен контролљнăй ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, вĕренÿре вĕсене методикăлă кăтартусем параççĕ, пулăшаççĕ. Заочниксем вĕренÿре туллимар вăтам, вăтам шкулсенче вĕренекен ачасем ваљљи кăларнă улшăнман çирĕп (стабильный) учебниксемпе усă курмала. Заочниксем ваљљи „Средняя школа на дому“ кĕнеке тухса тăрат. Кĕнеке вĕренекенсене вĕренÿре пысăк усă парат. Кенекере учебниксемпе мĕнле вĕренсе пымалли çинчен методикăла кăтартусем пулаççĕ.

Смирнов.

Кружоксенче вĕренеççĕ

Сĕнтĕрвăрринчи пушар дружинĕнче ĕçлекенсем „ССР Сойузĕн историне“ Шестаков учебникĕ тăрăх вĕренме тытăнчĕç. Заљатисем икĕ кунтанах пулса пыраççĕ. Çĕнĕ çултанпа 26 заљати пулнă. Заљатисене пушар дружининче ĕçлекенсем пурте йĕркелĕ çÿреççĕ. ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ ĕçĕсене вĕренессипе çичĕ заљати туса иртернĕ.

Халĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн уйавне хатĕрленнĕ май, кружоксенче Хĕрлĕ Çар историне вĕренме тытăннă.

Вл. Сидйаков
Ив. Йефимов

П. СМИРНОВ
Тинĕс-Çар Флочен Халăх Комиссарĕ

ССР Сойузĕн тинĕспе океан хăватлă флочĕ

Правителствă 1937 ç. декабĕрĕн 30-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх тата вăл постановленине ССРС Аслă Совечĕн икĕ палатин 1938 çулти йанварĕн 15-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи ларăвĕнче çирĕплетнĕ тăрăх Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне тунă.

Государствăн çакă пал лă акчĕ пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ хăйĕн ÿсĕмĕн çĕнĕ сыпăкне кĕнине кăтартат.

ССРС Аслă Совечĕн Сессинче совет правителствин пуçлăхĕ Молотов йулташ пите те тулли, çителĕклĕ уççăн ăнланмала çапла каланă:

„Хăватлă Совет державĕн хăйĕн интересĕсене вырăнлă, пирĕн аслă ĕçе тивĕçлĕ тинĕс тата океан флочĕ пулмала.

Çакăн пек флот, вăйлă техникăпа хĕçпăшаллантарнă, хăватлă тинĕс артиллерийĕпе хĕçпăшаллантарнă совет флотне тивĕçлĕ, килĕшÿлĕ тинĕс авиацийĕ туса панă флот организацилес тесен тата квалификацилĕ морйаксемпе тинĕс техникĕсен йышлă кадрĕсене советла вĕрентсе ÿстерес тесен—çĕнĕ Халăх Комиссариачĕ кирлĕ, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕ кирлĕ.

Шăпах çавăнпа та ĕнтĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар ÿсни пирки, ăна малашне те пуйан техникăпа хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе куњсерен калама çук пысăккăн ĕçлес пулат, тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăрăшакан красноармейецсемпе командирсене болљшевикла воспитани парас тĕлĕшпе чылай лайăхрах ĕçлес пулат. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ—Хĕрлĕ Çарта çак пĕтĕм ĕçе йертсе пырасси умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăнăран, тинĕс-çар флочĕ çине йатарласах, вăйлăрах çаврăнса пăхма кирлĕрен, епĕр Оборонă Халăх Комиссариачĕпе пĕрлех, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕ пулма кирлĕ, тесе шутлатпăр.

Пирĕн задачă—Совет Сойузĕн тинçĕр синчи чиккисемпе тинĕс çыранĕсене сыхлас ĕçе тата çÿлерех çĕклесси пулат. Пирĕн морйаксем хăйсен задачине чыслăн пурнăçа кĕртрĕç. Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕ советăн вăйлă тинĕс-çар флотне тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ырми-канми ĕçлĕ, тесе шанса тăратпăр“.

Молотов йулташăн çак сăмахĕсенчĕ пирĕн аслă социалисăмла çĕршыва тивĕçлĕ тинĕс вăйĕсен строителствин мĕн пур программине панă, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн пурнăçласа пымалли тĕп задачĕсене пурне те кăтартса панă.

ССРС—тинĕслĕ аслă державă. Пирĕн тинĕс чикки темиçе пин километрсене чăсăлат. Тĕнчери пур тинĕссем тата океансем тăрăх совет суту-илÿ карапĕсем иксе çÿреççĕ. Совет суту-илÿ флочĕн тоннажĕ çулсеренех ÿссе пырат.

Пирĕн таса совет çĕрне тинĕс çинчен пырса кĕрейми тăвасси, çĕршыва фашисла вăрă-хурăхсем тинĕсрен пырса тапăнассинчен сыхласси, советăн Хĕрлĕ йалавлă суту-илÿ карапĕсене тĕнчери çĕрĕн кирек-хăш пайĕнче те ăнăçлăн ишме ле тăвасси—пирĕн Тинĕс-Çар флочĕн чи таса тивĕçĕ пулса тăрат.

Иулашки çулсенче партин Сталинла Комитечĕпе Совет правителстви тăрăшнипе, Сталин йулташ тăрăшнипе, Лăпкă океанпа Çурçĕр тинĕсĕсенче çĕнĕ флотсем тунă, Балтипе Хуратинĕсри кивĕ флотсене тата Амур, Каспий, Днепр флотилисене чылайах вăйлăлатнă. Тинĕс часовойĕсем пирĕн çĕршыва пымалли çыран сене кăнтăртан та, çурçĕртен, хĕвелтухăçĕнчен те хĕвеланăçĕнчен çирĕп сыхлаççĕ.

Совет Сойузĕ мирлĕ политикă тытса пырат. Пирĕн правителствă мирлĕ политикăна вĕçне çитийех пурнăçласа пымали пĕр майа та астумасăр хăвармарĕ.

Хамăрăн мирлĕ политикăн принципне асра тытса, висĕ державă (Англи, США, Франци) 1936 çулти мартăн 25-мĕшĕнче Лондонра тунă тинĕс килĕшĕвĕ тăрăх, епĕр Англипе тинĕс килĕшĕвĕ тунă. Паллах, пирĕн айăппала мар ĕнтĕ, çак килĕшĕве Лăпкă океанри флотра пурнăçа кĕртме май килмест-ха. Йапони (хĕвеланăçĕнче Итали пекех) ку таринччĕнех висĕ державă 1936 çулта тунă килĕшÿ çумне хутшăнмаст, пирĕнпе пĕр пĕрин çине тапăнмала мар пакт тума килĕшмест.

Агрессилĕ çĕршывсем йут çĕрсене тытса илес политикăна, вăрçă хускатса йарас политикăна, ССРС-не хирĕç кĕрешес политикăна тытса пыракан державăсенчен блок тăвассишĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ.

Пирĕн хăшпĕр кÿршĕсем хăйсене тинĕс çинчи аслă державсем вырăнне хурса ĕлĕкхи кивĕ ăнланусем тăрăх: ССРС вăл—кивĕ Российă тесе шутлаççĕ. Вĕсем хытă йанăшаççĕ. ССРС-н çĕнĕ флочĕ хăйĕн кÿршисене, вĕсен вăйлă йенĕсене тата начар йенĕсене тĕплĕн сăнаса вĕренет.

Иулашки çулсенче тĕнче фашисла государствăсен политики ăçтала кайнине лайăххрах курчĕ. Итали Абиссинине тытса илчĕ, Йевропăра тата Азире вăрçăсен пуçламĕшĕ пулса тăчĕ. Фашисла интервентсем пур тĕрлĕ çарсемпе те усă курса Испани халăхне хирĕç хăйсен киревсĕр ĕçне тăваççĕ. Германипе Итали авиацийĕ, артиллерийĕ, танкĕсем, тинĕс-çар вăйĕсем—вĕсем пĕтĕмпех Испани халăхне çĕмĕрсе тăкма илсе пынă хĕçпăшалсем. Çĕр чăмăрĕн тепĕр пайĕнче—Азире—Йапони империалисĕсем Китай халăхне туртса çураççĕ.

Германи флочĕн пĕр пайĕ пĕр татăксăр Испани çыранĕсен хĕррин че тăрат, Йапони флочĕ те Китай шывĕсенче çапăçат.

Çакă ĕнтĕ, фашисла агрессорсем вăрçă пуçласа йарас пулсан, вăрçăра тинĕс-çар флочĕ пысăк вырăн йышăнасса пĕлтерет.

Тинĕс-çар флотне тăвас ĕçе укçа-тенкĕ йани, çĕнĕрен тăвакан карапсем хушшинчи вăрçă карапĕсен хисепĕ пысăк вырăн йышăнни, кивĕ карапсене çĕнетни, çĕнĕ типлă карапсем туни—çаксем пурте капиталисла державăсем тинĕс çинче те, типĕ çĕрте те пысăк вăрçа вăйлăн хатĕрленни çинчен калаççĕ.

Ун çинчен 1914—1918 ç. ç. империалисăмла вăрçă хыççăн вăрçă флочĕ ÿснине кăтартакан хисепсем те уççăнах кăтартса параççĕ. 1936 çулсене çитиччен паллăрах тинĕс державĕсене тинĕс-çар флотне тăвасси вăйлăн пулса пычĕ. Ку строителствă пуринчен ытла — крейсерсем, миноносцăсем, шывайĕнчен çÿрекен кимĕсем тăвас йенĕпе пулса пычĕ. Анчах йулашки çулсенче флот карапсен пур класĕпе те, вăл шутран линкорсем тăвассипе те, сасартăк ÿсни палăрат. 1937 çулта ултă государствăра 26—35 пин тоннажлă линкорсем 19 тунă. Çав государствăсенче шывайĕнче çÿрекен кимĕсем 490. Чылай капиталисăмла çĕршывсем тинĕс-çар ĕçĕ тĕлĕшĕнчен пĕр пĕрипе ăмăртсах хĕçпăшалланаççĕ.

Вăйсăррисем агрессорсем хĕснине хирĕç тăма пултараймаççĕ. Вăйсăррисем хирĕç çавăрăнса çапайрас çуккине шанса агрессорсем вĕсене ним вырăнне хумасăрах тапăнаççĕ. Епĕр фашисла агрессорсен айне пуласшăн мар. Пирĕн çине тытса илес шухăшпа килсе кĕме тăракансене çĕмĕрсе тăкмалах отпор пама хатĕр пулмала. Епĕр агрессора вăл ăçтан килет, çавăнтах—хăйĕн шăтăкĕнчех çапса салатăпăр.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ ССРС оборонă вăйхăватне малала та çирĕплетсе пыни, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне малала та çирĕплетни—мирлĕ саманашăн кĕрешни, фашисла агрессорсем Совет Сойузĕ çине тапăнма хăтланнине хирĕç кĕрешни пулат.

Пирĕн тăван çĕршыв тинĕс-çар флочĕн историйĕнче сахал мар паха ĕçсем. Пирĕн халăх тинĕс-çар ĕçне вĕсĕмсĕр йуратнине пĕрре кăна мар палăртрĕ. Вырăс флочĕ пĕрремĕш Петр вăхăчĕсенче вăл саманари чи вăйлă флотсенчен пĕрипе—шведсен флочĕпе кĕрешсе чаплă çĕнтерÿ турĕ. Вырăс флочĕ Чесмен вăрçинче Синоп патĕнчи çапăçура хăйне мухтавлăхпа витрĕ. Вырăс морйакĕсем 1854—1855 ç.ç. Крым кампани вăхăтĕнчĕ Севастопољ оборонинче калама çук паттăрлăхлă пултарулăха кăтартрĕç. 1905 çулти майăн 14—15-мĕшĕсенче Цусима патĕнчи çапăçура вырăс морйакĕсем паттăрăн çапăçрĕç. Патша адмиралĕсен ăссăрлăхĕне киревсĕрлĕхĕ кăна вырăс флотне çĕмĕрсе тăкмала турĕ. 1914—1918 ç.ç. тĕнчери вăрçă вăхăтĕнче те вырăс флочĕ сахал мар тĕлĕнмеле ĕçсем турĕ. Тата вырăс морйакĕсем пирĕн халăхăн патша йĕркине хирĕç революцилĕ кĕрешÿвĕн историйĕнче мĕн чухлĕ паллă страницăсем çырса хăварчĕç! Потемкинцăсене, очаковцăсене кăна аса илер, аса илер ССРС граждăн вăрçинчи пур фронтра та хăйсен социалисăмла тăван çĕршывшĕн кĕрешнĕ революцилĕ морйаксен чаплă ĕçĕсене!

Граждăн вăрçин пур фрончĕсенче те йертсе пыракансем пулса, командирсем, комиссарсем, политработниксем пулса, хĕвелтухăç фронтĕнче, Деникина, Врангеле, Йуденича шурă полљаксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте, революцилĕ морйаксем хăйсене иксĕлми чаплăхпа витрĕç. Революцилĕ Балтий флочĕ „Хăйсен сыспа сăмсине пирĕн совет пахчине пырса чикме“ мĕнле хăрушшине интервентсене темиçе хутчен те питĕ лайăх ăнлантарса пачĕ.

Революцилĕ морйаксем, Хĕрлĕ йалавлă Балтий флочĕ 1919 çулта Сталин йулташ Петрограда хÿтлеме организацилеве оборонăра пĕчĕк вырăнах йышăнмарĕç.

Сталин йулташ унчухне Хĕрлĕ йалавлă Балтий флочĕн ĕçĕсене калама çук пысăк хак пачĕ.

„Флот çинчен темиçе сăмах каламасăр пултараймастăп. Пĕтсе ларнă тесе шутлакан Балтий флочĕ чăннипех те çĕнĕрен çуралнине саламламасăр тăма çук. Çакна пирĕн йулташсем кăна мар, пирĕн тăшмансем те йышăнаççĕ. Çавăн пекех тата вырăс офицерĕсен суранĕ—унăн сутăнчăклăхĕ—флотăн командăй составне сахалтарах тивни те çавăнçлă: Российăн тивĕçлĕхĕпе никама пăхăнмаламарлăхне Англи ылттăнĕнчен пахараха хуракан çынсем те тупăнчĕç. Вырăссен революцилĕ флочĕн лайăх йăлисене чĕртсе Балтий матросĕсем çĕнĕрен хăйсене хăйсем тупрĕç. Çак условисемсĕр Петрограда тинĕс йенчен пулма пултарнă чи хăрушă кĕтменлĕхсенчен сыхлама пултарайман пулĕччĕ. Пирĕн флот çĕнĕрен çуралнине кăтартма тĕслĕхлĕ характеристикă вăл—ниуњ уйăхĕнче пирĕн 2 миноносцă тăшманăн 4 миноносципе тата 3 шывайкимĕпе çапăçни пулат, вăл çапăçуран матроссем хăйсене хăйсем шеллемесĕр çапăçнипе тата отряд начаљникĕ пĕлсе йертсе пынипе, пирĕн миноносцăсем çĕнтерÿлĕн тухнă, тăшманăн шывайкимне пыва путарнă“.

Паттăрла çапăçу йăлисем пирĕн тинĕс-çар флотĕнче сывă, вĕсем ĕмĕрлĕхех сывă пулĕç. Кун çумне тата совет влаçĕ

Партактивăн районри пухувĕ

Февралĕн 14-мĕшĕнче Шăхасанта партактивăн районри пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕн решенийĕсем çинчен сÿтсе-йаврĕ. Ку ыйтупа ПСК(б)П райкомĕн секретарĕ Федоров йулташ доклад туса пачĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти феврал-март уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕ хыççăн, Шăхасан районĕнчи парти организацийĕ 11 коммуниса парти ретĕнчен кăларнă. Вăл парти организаци шутĕнчен 10 процент пулаť.

Парти ретĕнчен кăларнисенчен 7-шĕ партколлегине апелйаци панă. Вĕсенчен 4-шĕ пирки райком решенийĕсене çирĕплетнĕ. Районри прокурор пулса ĕçленĕ Чижова райком хытă йатласа партире хăвармала тунă пулсан, партколлеги ăна парти ретĕнчен кăларнă. Тепĕр ĕçпе — парти членĕ Осипов ĕçĕпе—партколлеги райком решенийе пăрахăçа кăларса, Осипова парти ретĕнче хăвармала туса йатласа хăварнă. Петрова партийче хăварса парти членĕнчен кандидата куçарнă.

Актив пухăвĕнче тухса калакансем çак фактăсем тăрăх ПСК(б)П райкомĕ, уйрăм коммунистсен ĕçĕсене çителĕклĕ тĕплĕн пăхманнине палăртрĕç. Тата парторганизацийĕнче партилĕ воспитани ĕçĕ çителĕксĕрри çинчен каларĕç. Çавăнпа та уйрăм коммунистсене (Беспалов, Петров) моралйне йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнине партирен кăлармала пулнă.

Кулленхи хуçалăхла ĕçсене партилĕ-массăллă ĕçсемпе çыхăнтарса пымала. Çавă пирĕн çителĕксĕр. Вулав çурчĕсем, клубсем кулленхи ыйтусене çутатса пыма пултараймаççĕ. Пуринчен ытла тĕне хирĕç ĕçлесси йулса пыраť—тет Сорокин йулташ.

Парти организаци комсомолецсене йертсе пырас ыйту çинче хыттăн чарăнса тăчĕ актив пухăвĕ.

Комсомол организацине епĕр çителĕклĕ йертсе пырайман, çавăнпа та унта комсомолран кăларас ыйтупа политикла йăнăшсем тунă. Айăпсăр комсомолецсенех комсомолтан кăларнă. Ку ыйтура ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ тĕрĕс йертсе пырас вырăнне, унăн представителĕ Баранов килсе комсомолăн районри активне тĕрĕс мар çул çине тăратрĕ,—тет докладчик.

Обкомол представителĕ Баранов района пырса райкомолăн çавăн пек йăнăшĕсене йусас вырăнне, вăл йăнăшсене татах тарăнлатнă. Вăл Афанасйева, Григорйевана çителĕклĕ айăпсăрах комсомолтан кăларттарнă. Унчухне райкомол секретарĕ пулнă Соколова сăлтавсăрах Капитоновна çыхăну тытнă тесе айăпланă.

— Капитонов мĕнле тăшманла ĕçсем тунă пулнă?—тесе ыйтаççĕ Барановран комсомолецсем комсомол актив пуххинче.

— Капитонова клас тăшманĕ тесе çырнă, çавăнпа ун çинчен ыйтма кирлĕ мар,—ответлет Баранов.

Çак тунă йăнăшсене райкомол йусама пуçланине паллă туса, ку ĕçре района Обкомол пачах çителĕксĕр пулăшнине палăртрĕ парти активăн пухăвĕ.

Уйрăм çынсене тĕрĕс мар ĕçрен кăларнисем районри ытти организацисенче пуррине те палăртрĕç.

Пуху вĕçĕнче ПСК(б)П Обкомĕн представителĕ Чурилов йулташ тухса каларĕ. Вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварте пулнă пленум решенийĕсене тăнлантарса парса, вăл решенисене пурнăçласси мĕнле татăклă ĕçсем тумалине кăтартса пачĕ.

Соколов.

Комсомол йышĕ ÿсет

ИШЛЕЙ. Йулашки вăхăтра районра комсомол ĕретне кĕме ыйтса зайавлени паракансен йышĕ ÿсме пуçларĕ. ПСÇЛКС райкомĕ кăçалхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 10-мĕшне çитиччен 40 çамрăка комсомол ĕретне илнĕ.

Комсомола колхозсенчи малта пыракан çамрăксем, шкулсенчи вĕренÿре малта пыракансем ытларах кĕреççĕ. Çак кунсенче Тивĕшри вăтам шкулта вĕренÿ ĕçĕнче малта пыракансем 12 çамрăк комсомол ĕретне кĕчĕç.

Çавăн пекех Тарăнçырмари „Комбайн" колхоз çумĕнчи комсомол комитетĕнче 6 çамрăка комсомола илнĕ. Çĕнĕрен комсомола илнĕ çамрăксем халĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ, политшкулсене çÿреççĕ.

Вл. Сергейев.

РСФСР Аслă Совет суйлавне хатĕрленеççĕ

ТУТАРКАС. Моркаш йалсоветĕнче „РСФСР Аслă Советне суйламали Положени" пичетре тухсанах, ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ агитаторсем ĕççыннисене РСФСР Аслă Совет суйлав саккунне вĕрентме тытăнчĕç. Йалсоветĕпе 18 кружок организацилерĕç. Халĕ кружоксен занатийĕсем 2-шер хут пулса иртрĕç. Ăнлантарула ĕçре агитаторсене парторг Шишкин кулленех пулăшса пыраť. Агитаторсем „Наша родина", „СССР и капиталистические страны" тата ытти литературăсемпе усă кураççĕ.

М. Исайев.

КАНАШ. Карăкли йалсоветĕнче „РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине" вĕрентес ĕçе лайăх йĕркелерĕç. Колхозри кашни бригадăрах Положенине вĕренмели кружоксем ĕçлеме пуçларĕç. Агитаторсем çамрăксем хушшинче лайăх ĕçлеççĕ. Кашни ернерех колхоз клубĕнче вечĕр пулаť. Вечĕрсенче РСФСР Аслă Совет суйлавне хатĕрленес ыйтупа докладсем туса параççĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче пулнă вечĕрта суйлав Положени çинчен ăнлантарчĕç. Унта пурĕ 85 çын пулчĕ.

С. Терентйев.

ТРАК. Чылай колхозсенче РСФСР Аслă Советне суйламали Положенийе вĕренме тытăнчĕç. Çавал-çырма йалсоветĕнчи „Çĕнĕ хуçалăх," „Новый мир" колхозсенче пĕрер занйати пулса иртнĕ Занйатисене пропагандист С. Алексейев йулташ иртерет. Занйатисем аван иртеççĕ.

Карай, Упи, Уйкас Йунтапа йалсоветĕсенчи колхозсенче те РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине вĕренессипе йатарласах кружоксем организацилеççĕ.

Февралĕн 18 мĕшĕнче район центрĕнче РСФСР Аслă Советне суйлама хатĕрленес ыйтупа пропагандиссен курсĕ уçăлчĕ. Курсра 100 çынна йахăн вĕренет.

Ив. Х.

ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Наводчик ĕçре (Мускаври Хĕрлĕ йалавлă Пролетарилĕ стрелковой дивизи). Фото-етйуд (1936 çулхи ийулйĕре ÿкернĕ).

Б. Дорофейев фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Уйăх планне тултарнипе кĕтсе илеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, (хамăр корр). Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине предприйатисенче ĕçлекенсĕм çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

„Болшевик" заводри малта пыракан Пархисенко коммунис бригади йаланах плана 105—115 процентшар тултарса ĕçлет. Февралĕн 6-мĕшĕнче 8742 килограм екстракт туса кăларса сменăри нормăна 116 процент тултарчĕ. Çак бригадăри диффузоршчик Здобнов, выпаршчик Никифорова йулашки вăхăтра пĕр браксăр ĕçлесе нормăсене 120-шер процент тултарса пыма пуçларĕç.

Пархисенко йулташ бригадинчи рабочисем уйăх планне февралĕн 23-мĕшне тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Пурте ăмăртаççĕ. Çанна вăхăтра Хĕрлĕ Çарпа тинĕс-Çар флочĕ çинчен каласусем туса ирттереççĕ.

Комбинатри цехсем те уйăх планне срукчен тултарассишĕн ăмăрту пуçарса йанă. Столйарнăй цехри комсомолец Василйев йулташ йертсе пыракан сменăри рабочисем плана февралĕн 23-мĕшне тултарма пулаççĕ. Ку сменăри В. Касйанова (торцовалщчица), Гуçков (станочник) уйăх планĕсене февралĕн 15-мĕшнех тултарчĕç. Авса пукансем тăвакан цехри стахановецсем: Маскейев, Максимов т. ыт. те феврал уйăх планĕсене çак кунсенчех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Допризывниксем-значкиссем

ИШЛЕЙ. Кшавăшри çар ĕçне вĕренмели пунктри 1917—1918 çулсенче çуралнă допризывниксем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ флот 20 çул тултарнă йубилей йачĕпе иртекен социалисăмла ăмăртува хутшăнчĕç. Çак ăмăртува хутшăнса допризывниксем хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илчĕç. Çар ĕçне лайăх вĕренсе пыма, дисциплинăллă пулма тата тĕрлĕ оборонă значокĕсен нормисене пама пулчĕç.

Допризывниксем кĕске вăхăтрах çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе нумай пĕлÿ илчĕç. Çар ĕçне вĕренмели пунктран 16 допризывник „отлично", 28 допризывник „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Кунпа пĕрлех оборонă значокĕсен нормисене пачĕç. Вĕренÿ вăхăтĕнче пунктра „Допризывник" йатлă стена хаçачĕ тухса тăчĕ.

Вл. Сергейев.

Вĕсем маçтăр пулма тивĕçлĕ пулчĕç

Вĕсем иккĕшĕ кăнтăрлахи апата кайнă чухне паллашнă. Федор Свйатов хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă хыççăн, Бареслав Пиулский те хăйĕн ĕмĕчĕсем çинчен пĕлтернĕ. Çавăнтан вара вĕсем йаланах пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма пуçланă. Клубра та, цехра та йе тата канмали кунсенче те йаланах пĕрле çÿренĕ. Халĕ те пĕрлех вĕсем. Пĕр цехра ĕçлеççĕ. Ĕçре йе вĕренÿре пĕлменни тулăнсан, пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ.

Федор Свйатов йулташ инструменталнăй цехра строгалщчик пулса ĕçлет. Ку ĕçе ăна нумай пулмасť куçарнă. Унччен вăл пилонасетчик пулса ĕçленĕ. Завода 1936 çулта килсе кĕнĕ. Хăйĕн специалнăçне вăл уйрăм шкулта вĕренсе мар, хăй тĕллĕн тăрăшса вĕреннипе çĕнсе илнĕ. Халĕ Свйатов йулташ тĕрлĕ ĕçсем тăваť. Хăшпĕр чухне резецсем, штампсем, тепĕр чухне винтăсем тăваť. Ăнчах темле ĕç пулсан та вăл хăй станокĕпе лайăх пахалăхлă тавар туса кăлараť. Йанвар уйăхĕнче нормăна 400 процент таран тултарнă. Ку уйăхра унăн ĕçукçи те чылай ÿсрĕ. Çулталăк кайала уйăхне 150—200 тенкĕ илнĕ пулсан, 1937 çулăн декабĕр уйăхĕнчен пуçласа 425 тенкĕ таран илме пуçланă.

Свйатов хăйĕн йулташĕпе Береслав Пиулскийпе ăмăртса ĕçлет. Договорта кăтартнă тăрăх вĕсен брак тумала мар, простой тăвассине пĕтĕмпех пĕтермеле тата кашни кунхи нормăна 150 процентран кайа мар тултарса ĕçлемеле.

Çак обйазателствăна иккĕшĕ те ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Февралĕн малтанхи 5 кунĕнче иккĕшĕ те ĕç нормисене 300-шер процент тултарчĕç, хăшпĕр кунсенче 500 процент тултараççĕ. Çакăн пек çамрăк стахановецсем заводра сахал мар. Вĕсенчен нумайĕшĕсем комсомолецсем. Вĕсен йышĕ кашни кунах ÿссе пыраť.

Производствăлă хастарлăх ÿсни пе пĕрлех, çамрăксен политикăла пĕлÿлĕхĕ те ÿссех пыраť. Акă самахран: Кротов завода килсенех малтан рабочи пулса ĕçленĕ. Хăй тĕллĕн тăрăшса вĕренсе, иртнĕ çулталăк хушшинче вăл чи лайăх инструменталщик пулса тăчĕ. Йанвар уйăхĕнче Кротов йулташ нихçан туман рекордсем турĕ. Унăн нормă тăрăх 3 сехет хушшинче 1 фризă хăйраса тумала пулнă пулсан, вăл пĕр сехетре 3 фризă хăйранă. Çапла вара вăл сменăри нормăна 900 процент таран тултарса ĕçленĕ. Çавăнпа пĕрлех фризăсен пахалăхĕ те питĕ лайăх.

Кротов хăй ĕçлекен цехра комсомол организаторĕ пулса ĕçлет. Заводри „Вагонник" хаçатан активлă рабкорĕ шутланса тăраť. Вăлах рабочисем хушшинче хаçат-журнал вуласа ăнлантарас ĕçе туса пыраť. Ăна йанвар уйăхĕнче сменă маçтарне куçарчĕç. Унăн смени халхи вăхăтра малта пыракан сменăсенчен пĕрийĕ шутланса тăраť.

Товарнăй комбинатра ĕçлекен комсомолецсем: Горйачев, Богомолов, Никитин тата Майоров йулташсем те чылай ÿсĕмсем турĕç. Горйачев йулташ клепалщикре ĕçлесе кашни кунхи нормăна 500 процент тултараť. Богомолов, Никитин, Майоров йулташсем маçтăр йатне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Нумай пулмасť вĕсене виççĕшне те маçтăр пулса ĕçлеме куçарнă.

Çакăн пек ÿсеççĕ комсомолецсем. Вĕсен хастарлăхĕ пысăк. Хăйсен ырă тĕслĕхĕсемпе вĕсем ытти рабочисене пример кăтартаççĕ, вĕрентеççĕ, кирлĕ чухне пулăшаççĕ.

Анчах комсомол комитечĕ малта пыракан комсомолецсен опычĕсене сарассипе çителĕксĕр ĕçлет. Комитет секретарĕ Демйашев йулташ комсомолец-стахановецсене тĕплĕн пĕлмест.

Хар. Лисин.

Електростанци тăвассине хăвăртламала

ТРАК. Именкасси тĕлĕнче Çавал шывĕ çинче пулакан електростанци валли пĕве пĕвелессине 1937 çулăн вĕçĕнче туса пĕтермеле пулнă. Анчах та строителствă ĕçне тĕрĕс йĕркелеменнине пула, пĕве пĕвелесси ку тарана çитиччченех часăлса пычĕ. Пĕвене пĕвелесе çитерме 1000 кубла метр çĕр чавса купаламала, 150 кубла метр чул кирлĕ. Çак ĕçсене хăлех туса пĕтермесен, халиччен тунă ĕçсем те ахалех сайа кайма пултараççĕ. Çавăнпа та ку ĕçе хăвăртламала.

Строителствă ĕçне çуркуннеччен пурнăçа кĕртме кашни кун 350 çын ĕçлени кирлĕ. Йулашки вăхăтра ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнă. Кулленех 150 çынна йахăн çеç ĕçлеççĕ.

Строителствăра Именкасси йалсоветне кĕрекен "Малала," Хозакасси йалсоветне кĕрекен „Çĕнĕ йал" колхозсем пысăк тĕслĕхсем кăтартаççĕ. „Малала" колхоз членĕсем Михайлов, Федоров, Герасимова, Рыжов, „Çĕнĕ йал" колхозран Кузьмин, Григорйева, Василйев йулташсем ĕçрен пĕр татăлмасăр кашни кун нормăна 150 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах „Победа", „Комбайн", „Чапайев" тата Молотов йачĕпе тăракан колхозсем питĕ сÿрĕккĕн ĕçлеççĕ. Ку колхозсен председателĕсем строителствăна ĕçлеме çынсем организацилес тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Районри организацисем те строителствăна тивĕçлĕ пулăшу парасси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Çавна пула строителствă ĕçĕ йулса пыраť.

Ив. Хатайевский.

ТĂЛĂХСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

Тимĕрçкассинчи „Красный луч" колхозра (Шăхасан р-нĕ) тăлăхсене пулăшма йатарласа пулăшу касси организацилерĕç. Çак кассă колхозри тăлăх ачасене—12 çулхи Тимушпа 8 çулхи Митйана—укçа тенкĕ йенчен те, кĕпе-тумтир йенчен те вăхăтра пулăшса тăраť.

Х. Кузнецов.

пулнăранпа иртнĕ 20 çул хушшинче пирĕн çамрăксем политикăпа културă йенчен ÿснине хушас пулаť. Тинĕс-çар флотĕнче тĕп вырăн çамрăксем йышăнаççĕ. Вĕсем хăйсен социалисăмла тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр йуратаççĕ, унăн оборонине тĕреклетес ĕçе ăнланулăн хутшăнаççĕ. Вĕсем нихăçан курман вăй-хăват пулса тăраççĕ.

1929 çулта Сталин йулташ Хуратинĕс флотĕнче „Червона Украина" крейсер краснофлотцисем патĕнче пулчĕ.

Хуратинĕс чаплă флочĕн боецĕсемпе нумай вăхăт калаçнă хыççăн, крейсер çинчен тухса кайнă чух краснофлотцăсем патне Сталин йулташ çапла çырса хăварнă:

„Черв. Украина" крейсер çинче пултăм. Харпăрхăй пултарулăх вĕчерĕнче пултăм. Пĕтĕмĕшпе илсен, çакăн пек курăнаť: ытараймли паха çынсем, хамăрăн пĕрлĕхлĕ ĕçшĕн хуť те мĕн тума та хатĕр хăйулă, културăлă йулташсем. Çакăн пек йулташсемпе ĕç тума кăмăллă. Çакăн пек боецсем хушшинче тăшманпа çапăçма кăмăллă. Çакăн пек йулташсемпе експлоататорсемпе пусмăрлакансен тĕнчине çĕнтерме пулаť. Çитĕнÿсем сунатăп „Чер. Украина" çинчи йулташсене. 25/VII-29 ç. **И. Сталин**".

Сталин йулташ çакă социалисăмла çĕршывăн тинĕс чиккисене сыхлама шанса тăратнă çынсене хаклани пайанхи кунра тата та ытларах тĕрĕс. Çак вăхăтра флот ÿсрĕ. Халĕ краснофлотцăсем хушшинче çурри ытла комсомолецсемпе парти членĕсем.

Совет Сойузĕн тинĕс чиккисем вĕçĕ-хĕррисĕр. Тинĕс çинчен хăрушлăх пысăк. Ленин—Сталин партийĕпе совет правителстви пĕтĕм халăх пулăшса пынипе, граждăн вăрçи иртнĕ хыççăн тинĕс-çар флотне тăвассипе пĕр ывăнмасăр ĕçлерĕç. Пирĕн флота тăвас ĕçе Хĕрлĕ Тинĕс-Çар флот шефĕ—Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕ активлăн хутшăнчĕ. 1934 çулти йанварĕн 30-мĕшĕнче ПСК(б)П XVII-мĕш сйесĕнче Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Ворошилов йулташ тинĕс-çар вăй-хăватне вăйлатас пирки çапла каласа пачĕ: „Сталин йулташ йаланах тата хăй хутшăнса йертсе пынипе епĕр хамăрăн тинĕсри çар вăйĕсене хăватлатас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр, мĕншĕн тесен ку çар темиçе пин километра уçăлнах чăсăлса выртакан тинĕс çыранĕсене сыхлас тĕлĕшпе пит те пысăк вырăн йышăнаť. Хамăр хушăмăрта каласан, ку тĕлĕшпе Серго йулташ çинче сахал мар ĕç тийенсе тăраť. Йулашки çулсенче епĕр Балтийпе Хура тинĕссенчи тинĕс вăйĕсене вăйлăлатса çирĕплетрĕмĕр çес мар... Ку участкăра та сыхлăхсăр пулас мар тесе хăшпĕр суднăсене çĕнĕ канал тăрăх çурçĕрелле те куçартăмăр.

Кунсăр пуçне, Приморйене тапăнас хăрушлăх тачăнах çывхарса тăнине кура, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче те тинĕс-çар вăйне тума тытăнмала пулчĕ... Хамăрăн тинĕсри вăйсем çинчен калассине пĕтерсе епĕ тата тепĕр хуť çакна палăртса пама кирлĕ тесе шутлатăп: Сталин йулташ ку участкăра та пикенсех, сталинла ĕçлеме тытăнчĕ, епĕ иккеленместĕп, пирĕн индустриализаци çĕнтерĕвĕсен никĕсĕ çинче çирĕпленнĕ карапсем тăвакан промышленнăç хамăрăн флотсене хăвăртрах рабочисемпе хресченсен чăн-чăн хăватлă флочĕ туса хума пулăшĕ..."

Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх комиссариатне туни—çамрăксен флота кайса ССРС оборонин вахтине тăрас икхĕлмн хастарлăхне çĕнĕрен хускатса йачĕ.

Епĕ Халăх Комиссариатне çамрăксенчен нумай килекен çырусенчен пĕрне илсе кăтартăп. Ăна çамрăк колхозник çыраť. Вăл 18 çулта. Хăйне флота илме ыйтаť.

„Йенчен тăшман пирĕн тинĕс чикки урлă каçма шухăш тытас пулсан, хамăн пĕтĕм вăйа панă пулăттăм. Епĕ, хамăр чечекленекен хуласемпе колхозсемшĕн тăшмансене хирĕç йулашки йун тумламĕччен çапăçнă пулăттăм. Епĕ мĕнле тинĕс çинчине пăхмасăрах: Инçет-Хĕвелтухăçĕнче-и, йе Çурçĕрте, кăнтăрта-и, йе Хĕвелтухăçĕнче—кирек хăш флотри çар карапĕ çинче те морйак пулма хатĕр".

Çак çамрăк колхозник Конйушков йулташ сăмахĕсене пĕтĕм совет çамрăкĕ калаť.

Совет çамрăкĕсем хушшинчен пултарулă кадрсем ÿсе çитĕнеççĕ. Çавăн пек çынсенчен пĕрне—1926 çулта кăна Тинĕс-Çар училищинчен вĕренсе тухнă Кузнецов йулташа асăнма пулаť. Вăл халĕ Лăпкă океанри флотăн командирĕ. 1935 çулта правителствă Кузнецов йулташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, 1937 çулта—Ленин орденĕпе тата Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă. Çакăн пекех 1929 çулта кăна Тинĕс-Çар училищинчен вĕренсе тухнă Дорэд йулташа илме пулаť, халĕ вăл пысăк соединенин командирĕ пулса тăраť. Дорэд йулташа 1937 çулта Ленин орденĕпе тата Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă. Флотра çакăн пек чаплă командирсем, политработниксем, красноармейецсем пирĕн çĕршерĕн те пиншерĕн.

Тинĕс-Çар флочĕ тăван çĕршыва сутакан тăшмансенчен: шпионсенчен тата ытти фашисла тасамарлăхсенчен, пăнтăхусенчен тасалаť. Краснофлотцăсем, политработниксем тата командирсем, партипе правителствă йатарласах çĕнĕ комиссариат туса флот çине пысăк шанчăк хунине, хăйсен ÿсĕмне вăйлатма хушнине ăнланаççĕ.

Аслă Советăн 1-мĕш Çеççийĕ Тинĕс-Çар флочĕ Халăх комиссариатне тăвасси çинчен йышăннă решенине пирĕн вĕçĕмсĕр аслă çĕршывăн пур кĕтессисенче те рабочисемпе колхозниксем, ăслăлăх тата искусствă çыннисем ырларĕç.

Йанварĕн 19-мĕшĕнче Сойуз Совечĕпе Националнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче ССРС Аслă Совет депутачĕсене саламланă сăмахĕнче Скоробогатко йулташ Ленин хулипе Ленинград облăçĕнчи рабочисен, колхозниксен совет интеллигенцийĕн йачĕпе çапла каларĕ:

„Епĕр пирĕн умма мухтавлă Хĕрлĕ Çара хăватлă вăрçă техникипе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе лартнă задачсене питех те тимлĕн, тăрăшса тата йуратса пурнăçлăпăр, тата совет правителствин пуçлăхĕ—Вйачеслав Михайлович Молотов Аслă Совет Çеççинче совет çĕршывĕ тĕнчере чи хăватлă Тинĕс-Çар флочĕ тăвасси çинчен калаçнине ĕçре пурнăçлас тĕлĕшпе хамăр йенчен тумалисене пурне те тăвăпăр.

Çак сăмахсем совет халăхĕ вăйлă тинĕс çар флочĕ тăвасси çине мĕнле пăхнине лайăх кăтартса параççĕ. Çакна ответлесе флот йенĕпе кĕçĕн командир Селезнйов йулташ çав ларурах çапла тухса каланă:

„Пире тата вăйлăрах флот, татах та çĕнĕлĕрех туса çитернĕ тинĕспе океан флочĕ кирлĕ. Çапла йышăнчĕ парти, çапла йышăнчĕ правителствă, çапла йышăнчĕ пĕтĕм совет халăхĕ.

Епĕр, краснофлотцăсем, командирсем, политработниксем ответлетпĕр: пирĕн çĕршыва тивĕçлĕ тинĕспе океан флочĕ пулатех".

Çак сăмах хăйĕн айĕнчи çирĕп никĕс çинче тăраť. Çак никĕс вăл—тинĕс-çар флотне тăвассине Сталин йулташ хăй йертсе пынинче пулаť. Çак никĕс хăватлă социалисăмла индустрире.

Социалисăмла çĕршывăн халхи флочĕ, социалисăм çĕршывĕн тинĕс оборонин кирек мĕнле задачисене те пурнăçа кĕртме хатĕр. Йулашки çулсенче пирĕн пĕтĕм çĕршывăн индустри ÿсĕмĕпе пĕрле, хĕрлĕ флот та çаплах хăйĕн пахалăхĕпе те, хисепĕпе те пуринчен ытла пыв айĕнчен çÿрекен кимĕсем тăвас йенĕпе ÿсрĕ.

Пирĕн линкорсем, 1914—15 ç. ç. тунă карапсем пулсан та, модернизаци тунă хыççăн халхи вăрçă карапĕсемпех пулса тăчĕç. Политикăпа економикă центрĕсене хÿтлесе тăма тĕреклĕннĕ районсем йулашки 5 çул хушшинче виçĕ хут ытла ÿснĕ.

Флотра çар ĕçне вĕренесси çулран çулах ÿссе пыраť. 1933 çулта тинĕс-çар флотĕнчи мĕн пур карапсем 560 пин милй кайнă пулсан, 1937 çулта вара 1-мĕлйун та 50 пин милй, урăхла каласан, 2 хута йахăн ытларах кайнă.

Çаксем вĕсем пурте тăшман тинĕсрен тапăнас мĕн пулсан, ăна çĕмĕрсе тăкма пирĕн вăйлă Тинĕс-çар флочĕ, тинĕс авиацийĕ, çыран оборони пуррине кăтартаççĕ.

Совет правителствин пуçлăхĕ Молотов йулташ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕррремĕш Çеççинче тухса каланă сăмахĕ çĕнĕ Халăх комиссариат работникĕсене, флот командованине, пирĕн оборонă индустри работникĕсене вĕсем мĕнле ĕçлесе пымаллине кăтартса паракан программă пулса тăраť. Промышленнăç работникĕсен кĕске вăхăтрах тинĕс-çар флотне пысăк тоннажлă карапсем памала, тинĕс-çар флочĕн строителстви хăвăртлăхĕсене вăйлатмала.

Тинĕс-çар флочĕн ÿсĕмĕн çĕнĕ тапхăрĕ çĕнĕ Халăх комиссариатĕнче ĕçлекенсемпе флот командованине пур командирсемпе политработниксене умра тăракан задачсене пурнăçлас тĕлĕшпе тата та ытларах тăрăшма хушаť.

Совет Сойузĕн тинĕспе океан флочĕ вăйлă пулмала, ăна çĕнĕ техникăпа вăйлă артиллерипе, тинĕс авиацийĕпе хĕçпăшаллантармала, ăна нумай хисеплĕ квалификацилĕ командирсемпе краснофлотцăсем памала, вăл кадрсене болшевикла воспитани памала—çаксем ĕнтĕ тĕп задачсем. Ку задачсене социалисăмла ăмăрту никĕсĕ, çĕнĕрен çĕклене пыракан културăпа организацилĕх никĕсĕ, техника пĕтĕм тарăнăшпех çителĕклĕн алла илнĕ тата революцилĕ хурçă дисциплинăна малала та çирĕплетсе пынă никĕс çинче кăна пурнăçлама пулаť.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕн постановленийĕ пирĕн партипĕн те, çĕршывшĕн та пысăк вырăн йышăнса тăраť. Сталинла Тĕп Комитет пур парторганизацисене те болшевикла сыхлăха пĕрмайах вăйлатса пыма, халăх тăшманĕсене пурне те ним хĕрхенÿсĕр пĕтерсе пыма, парти членĕсем çине çийелтен, ушкăнла пăхнине пĕтерме хушрĕ. Çак задача пурнăçлама командирсемпе политработниксен партилĕ-политикăлă ĕçе тата аванрах организацилемеле.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕн решенийĕ флотри парторганизацисене ĕçлемели конкретлă программă пулса тăраť.

Пирĕн тинĕспе океан вăйлă флотне тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеле. Пиртен ăна парти, правителствă, пĕтĕм совет халăхĕ ыйтаť, пиртен ăна пирĕн Сталин йулташ ыйтаť, çак ыйтăва ССРС тинĕс-çар флочĕ пурнăçа кĕртетех.

Вăрçă пуçланас-мĕн пулсан, пирĕн краснофлотцăсем, командирсем, политработниксем—линкорсен, крейсерсен, миноносцăсен, шывайкимĕсен, торпедă катерĕсен екипажĕсем, çыран оборонинче тăракан паттăр артиллериссем, тинĕс авиацийĕн летчикĕсем Рабочисемпе Хресченсен ытарайми Хĕрлĕ Çарĕпе пĕрле пирĕн социалисăмла оборонăн тĕп принципне: тăшмана вăл ăçтан пирĕн çине тапăнма хăтланаť, çав территори çинчех çĕмĕрсе тăкас, тинĕ сĕрте те, тинĕс çинче те, сывлăшра та çĕмĕрсе тăкас принципа пурнăçлĕ.

Гитлер Австри умне кăларса тăратнă требованисем

ПАРИЖ, 19-II. (ТАСС). Поĺ Низэн „Се суар“ хаçатра çырнă тăрăх, йулашки вăхăтра Австрире лару-тăру начарланнă. Поĺ Низан халиччен паллă пулса тăракан хыпар çумне çĕнĕ фактсем хушса кăтартат. Вăл Австрин шалти ĕçсен министрĕ Зейсс—Инкварт февралĕн 18 мĕшĕнче Берлинра Гитлер министрĕсемпе тата Гитлерпа хăйĕнпе курăнса калаçни çинчен кăтартса парат. Низан илнĕ сведенисем тăрăх Гитлер Австрин „тăван çĕршывĕн фронтне“ тасатса, унта Австрири гитлеровецсене кĕртме лe тават. Низан пĕлтернĕ тăрăх Гитлер Австри умне требовани кăларса тăратнă. Вăл требовани тăрăх, Австрич Лига нацинчен тухса Германи, Итали тата Йапони виççĕшĕ пĕрле тунă „Коминтерна хирĕçле“ пакт çумне перлешмеле. Малалла Гитлер Австри генералнăй штабне Германи штабĕпе килĕшӳ тума çар союзĕ йĕвĕрлĕ килĕшӳ тума ыйтнă. Çавăн пекех Германи Австрирен Чехословаки чиккине тăвата дивизи вырнаçтарма ыйтат. Йулашкинчен, Низан илнĕ сведенисем тăрăх, Гитлер Австрийе Германи çумне перлештерес тĕлешпе Австрире „плебисцит“ туса ирттерме ыйтат.

Австри халăхĕ Гитлерпа килĕшмест

ПАРИЖ, 19-II. (ТАСС). Францири хаçатсем Иннсбрукра (Австри) Шушниг Гитлер шантажĕ умĕнче тунă капитуляцине хирĕçлесе пысăк демонстраци пулса иртни çинчен пĕлтерeççĕ. Терле хаçатсен корреспонденчĕсем илнĕ сведенисем тăрăх, çав демонстрацире темиçе пин çын хутшăннă. Демонстрацире тухса калакан ораторсем чылайĕшĕ капитуляци политикине хытăн сивленĕ. Пуринчен ытла пĕр оратор: „Зейсс-Инкварт вăл Австри министрĕ мар. Вăл—Германи наместникĕ. Епĕр Германи наместникĕ аллинче пуличчен хамăр çĕршыв никама парăнса тăмала маррипе шеп кĕрешсе вилме хатĕр“, —тесе каласан демонстрацири çинсем хыттăн алă çупнă.

Фашисла провокацисем арканаççĕ

Англин „Сендей Диспетч“ хаçачĕ февралĕн 20-мĕшĕнче икĕ çынăн сăнĕсене йунашар пичетлесе кăларнă: пĕрне Бутенко сăнне, ăна темиçе ерне кайала Бухарестран илнĕ пулнă, теприне хăйне Бутенко текен çынăн сăнне пичетленĕ. Ăна Римран илнĕ.

„Сендей Диспетч“ хаçатăн експерт-фотографĕ: çак икĕ фотоӳкерчĕксене танлаштарса пăхсан, вĕсем çинчи сăнсем пĕр-пĕринчен пачах уйăрăлса тăраççĕ, — тесе пĕлтернĕ.

Чехословакири чылай хаçатсем те Бутенко сăнне тата Итали фашисĕсем Бутенко тесе йат панă шургвардейецăн сăнне пичетлесе кăларнă. Çав фотоӳкерчĕксем, пĕр-пĕринчен пачах уйăрăлса тăракансскерсем, фашисла провокацийе уççăн тăра шыв çине кăлараççĕ.

(ТАСС).

Иден отставкăна тухнă

Англин Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден февралĕн 20-мĕшĕнче отставкăна тухнă.

Иден отставкăна тухас умĕн Англи правителствин ларуве пулса иртнĕ, ку ларува Чемберленпа правителствăн ытларахăш пайĕ Англипе Итали хушшинче калаçу пуçлассине кирлĕ тесе шутлани палăрнă.

Иден çак калаçусене принцип тĕлĕшĕнчен хирĕçлемен, анчах калаçусем пуçланиччен Англи Италирен хăшпĕр гарантисем, сăмахран, Испанирен Итали çарĕсене кайала илсе кайас гаранти илесси пирки хыттăн тăнă. Агенствă Иден ку ĕç çине пăхнипе консервативлă тата оппозицилĕ партисен чылай пайĕсем килĕшнине кăтартса парат.

(ТАСС).

Йапони агреççине хирĕç

ХАНЬКОУ, 19.II. (ТАСС). Китайри нацилĕ правителствă аппаратĕнче халĕ те улшăнусем пулса пыраççĕ. Вăл улшăнусем Йапони агреççине хирĕç татăклăн тăракансен политикине çирĕплетес паллăпа пулса пыраççĕ. Нумайах пулмасть, Аньхуе провинци правителствин председателне Цзйан Цзо Пин генерала пострап кăларнă. Вăл Китайри вăрçă пуçланаччен Йапонипе килĕшӳ тума шутлакансем йенче пулнă.

Йутçĕршывсенче

◆◆ Токиора виçĕ кун ухтару тунă хыççăн „шанчăксар текен çынсене“ 4.500 çын арĕсленĕ.

◆◆ Испанири палхавçасем Алжиртан Францине пассажирсем лартса тата груз илсе каякан Франци параходне пенĕ. Пĕр снариад пароходран 150 метр ӳкнĕ.

◆ Китай çарĕсем Йапонин пĕр колонине тевилех çĕмĕрсе тăкнă. Йапони çарĕсен колони Хуанхэ юханшывĕн çурçĕр çыранĕ хĕррине ларакан Фынцӳ хули патне çитсе тунă пулнă.

★ Манчжурире пур çĕрте те Китай халăхне массăлă арĕслес хум сарăлса кайнă. Пĕр кун хушшинче кăна, февралĕн 13-мĕшĕнче, Харбинра йапонцăсем Китай—Хĕвелтухăç чукунçулĕ çинче ĕçленĕ çынсенчен мĕн пурĕ 500 çын ытла арĕсленĕ.

★ Польшăра массăлă суд процесĕсем пулса иртеççĕ. Судра иртнĕ çулхи август уйăхĕнче пулса иртнĕ пĕтĕмĕшлĕ забастовкăна хутшăннă хресченсене айăплаççĕ. Ку таринчен çав забастовкăна хутшăннăшăн 500 хресчене суд тунă, вĕсенчен 400 çынне тĕрлĕ наказанисем пама приговор йышăннă.

(ТАСС).

Нефтăниксен Пĕтĕм Сойузри канашлуве

Февралĕн 19-мĕшĕнче Бакура нефтăниксен Пĕтĕм Сойузри канашлуве уçăлнă, канашлува Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ председател пулса йертсе пырат. Каганович йулташ кĕскен умсăмах тухса каланă.

Канашлу 1938 çулхи плана тултармалла тăвас тата нефт промышленнăç ĕçне аванлатас ыйтува сӳтсе-йават.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

★ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă май ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. Ф. ФЕДЬКО йулташа пĕрремĕш ранг командарм çар званине панă.

★ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ З. А. ШАШКОВ йулташа Шывçул транспорт Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

★ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. И. ВОЛКОВ йулташа ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

Шупашкарта дезинфекци станцийĕ ĕçлеме тытăнат

Шупашкар хулинчи дезинфекци тĕп станцине, тĕпрен илсен, туса çитернĕ. Халь станцийе електричествă кĕртеççĕ тата вентиляци тăваççĕ. Февралĕн 20-мĕшĕнче санпропускник ĕçлеме тытăнат, унта душ тата дезинфекци камерĕ пулаççĕ. Йерекен чирлĕ кĕпе-йĕмсене çăвакан уйрăм, хăшпĕр машинăсем килейменнипе, кăшт кайарах йулса ĕçлеме тытăнат.

Дезинфекци станцинче киле пырса дезинфекцилекен, тĕрлĕ йапалсене йерекен чисрем йерсен дезинфекци тумали тата çумали аппаратурăпа йĕркеленĕ камерăлă-стационарлă дезинфекци, профилактикăлă дезинфекци, санитари тĕлĕшĕпе тасатакан уйрăмсем, ăслăлăхлă-практикăлă лаборатори тата транспорт пайĕ пур.

Дезинфекци станци умĕнче тăракан задачă вăл—йерекен чирсен (инфекци) йăвине пĕтерсе, вăл йерекен чирсене малашне сарăлма чарас тата вăл чирсене айакран килсе кĕме парас мар тесе дезинфекцилĕ ĕçсене пурнăçа кĕртесси, республикăри пĕтĕм дезинфекци ĕçне йертсе пырасси тата контроль туса тăрасси пулат. Çакăн пек ĕнтĕ дезинфекци станцин обйазанăçĕсем.

Дезинфекци станцине хăйĕн пĕтĕм пайĕсене йĕркелĕ ĕçлеттерсе пыма кадрсем кирлĕ.

Халь кадрсем çителĕксĕр пирки пĕтĕм ĕçсене çаварса илме пултараймаççĕ. Çак майпа дезинфекци станци çумĕнче февралĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа дезинфекторсем хатĕрлекен курс организациленĕ. Ку курс Шупашкар хулинче тата республикă районĕсенче ĕçлеме квалификацилĕ дезинфекторсем мĕн пурĕ 30 çын хатĕрлемеле.

Курс пĕтес умĕн дезинфекци ĕçĕпе лекцисем тума тата врачсене инструкцилеме Ленинградран йатарласа дезинфекци ĕçĕпе ĕçлекен профессора Окуневский йулташа чĕннĕ.

Партипе правителствă халăх сывлăхне сыхлас ĕçе вăйлатассишĕн çав тери хытă тăрăшаççĕ. Шупашкарта дезинфекци станцине уçни те çакна уççăн кăтартса парат.

Дезинфекци тĕп станци директорĕ—А. РОШКО.

92 доклад

Шупашкар хула совечĕ халăх хушшинче тумали культурăлă-массăлă ĕç планĕ туса хатĕрленĕ.

Хула совечĕн февральте март уйăхĕнчи ĕç планĕсем тăрăх пĕтĕмпе 10 вырăнта политикă, литература тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен 92 доклад пулмалла. План çинче кăтартнă темасемпе пулмали докладсене кăтартнă вырăнсенче йĕркелесе иртерес тĕлĕшпе уйрăм уполномоченнăйсем çирĕплетсе хунă.

Хула халăхĕ докладсемпе пысăккăн интересленет. Февралĕн 12-мĕшĕнче строителсен клубĕнче тунă докладa итлеме 600 çын, Хресчен суртĕнче 300 çын, Тĕп библиотекăра 90 çын, 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш номерлĕ шкулсенче 331 çын пынă. Çапла вара пĕрремĕш темăпа иртнĕ доклада итлекенсен хисепĕ 1231 çынна çитнĕ.

Кăтартнă вăхăтра пулса иртмели докладсем пурте кулленхи пулса иртекен политикăлă ыйтусемпе çыхăнса тăраççĕ.

Февралĕн 23 мĕшĕнче çак çулте асăннă 10 вырăнта „Сталин тата Хĕрлĕ Çар“. „Хĕрлĕ Çар шурполяксене çапса салатни“. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарчĕ“ темăсем тăрах докладсем пулаççĕ.

Мартăн 8 мĕшĕнче пулмали лекцисен темисем: „Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ“, „Тĕн тата хĕрарăм“, „Сталинла Конституци тата тĕн ыйтăвĕсем“ т. ыт. те.

Мартăн 18 мĕшĕнче докладсем Париж коммунĕ 67 çул тултарни çинчен пулаççĕ

Кусемсĕр пуçне Николай Островский, ССР Сойуз Аслă Совечĕн 1-мĕш Çеççи итогĕсем, 1917 çулхи февраль буржуалă-демократилле революци, Китайри вăрçă пуçланни çур çул тултарни, Некрасов тата унăн литературă творчестви, çĕр çинче çын пуçланса кайни çинчен докладсем тума палăртнă.

Арк. Нестеров.

Агитаторсен ĕçĕсем

ВĂРМАР. Аслă Чак йалсоветĕнче 24 агитатор, вĕсенчен комсомолецсем 13 çын. Кун а туллимар вăтам шкул пур. Шкулри учителсем халăх хушшинче политикăлă агитацине йĕркелесе йарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлесе пыраççĕ.

Хальхи вăхăтра учителсем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕн решенийĕсене халăха ăнлантарса параççĕ. Акă Никифоров учител колхозниксен пухувĕнче Молотов йулташ сăмахне ăнлантарса пачĕ.

Çавăн пекех Илйин учител Жданов йулташ сăмахне ăнлантарса пачĕ.

Малашнехи кунсенче Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарни çинчен, çуракине большевикла хатĕрленсе вăйлă тырпул туса илесси çинчен тата тĕне хирĕç калаçусем туса иртерĕпĕр.

Кусемсĕр пуçне тата халăха художествăлă литературăпа паллаштарас, тесе вечерсем тăватпăр.

Вас. Андрианов.

Колхозсем чукунçул строителствинче

** Тип-Çырма йалсоветĕнчи Димитров йачĕпе тăракан колхоз чукунçул строителствинче ĕçлеме йатарласах бригадă организациленĕ. Бригадăра 10 çын.

Колхозăн 64 кубла метр çĕр чавмала пулнă, вăл пайанхи куна 210 кубла метр чавса плана 328 процент тултарчĕ.

В. Павлов.

** Тĕрерти Спасов йачĕпе тăракан колхозпа Çĕнйалти „Правда“ колхоз чукунçул строителствинче тăрăшса ĕçлерĕç. „Правда“ колхозран 10 çын, Спасов йачĕпе тăракан колхозран 13 çын йалавах ĕçлесе тăрса, 105 кубла метр çĕр чавса купаланă. Уйрăмăнах кунта „Правда“ колхозри 70 çулхи Н. Йаковлев колхозник тăрăшса ĕçленине палăртмала.

Ст. Филиппов.

** Çак кунсенче „Коммунар“ колхозран 10 çын çурран, 3 çын лашапа, „Знамя колхоз-ика“ колхозран 5 çын тата „Оборона“ колхозран 9 çын чукунçул çине ĕçлеме кайрĕç.

Ал. Алгиç.

СПОРТ

Государствă учреждениссенчи работниксен ăмăртувĕ

Февралĕн 12—13-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче государствă учреждениссенчи работниксен сойузĕ тăрăх йĕлтĕрпе тата коньки чупса мала тухас тĕлĕшпе ăмăрту пулса иртрĕ.

Ăмăртува 27 йĕлтĕрçĕ тата конькипе чупакан 7 çын хутшăнчĕç.

10 километр хушăна арçынсем чупмали ăмăртура 1-мĕш вырăна Абакумов (Йетĕрне) йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 51 минут та 03 секундă. 20 километрлă ăмăртура Романов (Шупашкар) мала тухрĕ. Вăл çак хушăна çанталăк йапăх пулсан та, 2 сехет те 28 минутра чупса тухрĕ. 10 тата 20 километр чупмали ăмăртура 2-мĕш вырăна Василйев (Шупашкар) йышăнчĕ.

Ăмăртува хутшăннă икĕ хĕрарăмран Прокопйева (Шупашкар районĕ) 3 тата 5 километр чупмали ăмăртусенче 1-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Чупмали конькисемпе ăмăрту пулмарĕ. Ахаль конькисемпе 250 метр чупмали ăмăртура 1-мĕш вырăна Платунов йышăнчĕ, унăн вăхăчĕ 28 секундă; 2-мĕш вырăна Йенчиков тухрĕ (иккĕшĕ те Шупашкартан). 500 метр чупмали ăмăртура Йенчиков мала тухрĕ (1 минут та 08 секундă), 2-мĕш вырăнта—Платунов. 1000 метр хушăна чи малтан Йенчиков чупса тухрĕ, унăн вăхăчĕ 2 минут та 14 секундă, 2-мĕш вырăна Потемкин (Шупашкар) йышăнчĕ. Хĕрарăмсен 250 тата 500 метр чупмали ăмăртувĕсенче 1-мĕш вырăна Белкова, 2-мĕш вырăна Аверйанова йышăнчĕç (Иккĕшĕ те Шупашкартан).

Çак ăмăртусем хыççăн, Мускавра пулас, иртекен Пĕтĕм Сойузри ăмăртусене йама республикăра сборнăй командă суйласа илнĕ.

Командă составĕнче: йĕлтĕрçĕсем Абакумов, Василйев, Романов, Виноградов, Григорйев, Прокопйева йулташсем.

Конькипе чупакансем: Йенчиков Платунов, Потемкин, Крючков, Белкова, Аверйанова йулташсем.

Ăмăрту государствă учреждениссенчи работниксем хушшинче йапăх мар спортсменсем пуррине кăтартса пачĕ.

Сойуз обкомĕн çакна шута илес пулат. Çак малтанхи ăмăртупах лăпланса ларма йурамасть, профсойуз членĕсем хушшинче спорт ĕçне тăтăшах туса пырас пулат.

К. Говш.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăвашсен Государствă издателстви йулашки вăхăтра çак кĕнекесене пичетлесе кăларчĕ.

1. И. Т. Трофимов „Сывлăшран мĕн тупма пулат“. Кĕскен, ăнланмала чĕлхепе ку кĕнекере хими йавленисемпе кăштах паллаштарнă. Азот, кислород, углерод, углекислый газ çинчен, сывлăшăн ытти пайĕсене хăçан тĕпчесе пĕлни çинчен, сывлăшран тупнă йапаласемпе промышленнăçра тата йалхуçалăхĕнче усă курни çинчен каласа панă. Уйрăмăнах азот çинчен, унпа тырпул тухăçлăхне хăпартасси йĕнĕпе йепле усă курни çинчен каланă.

2. Сулйĕр строителстви çинчен йышăннă паллăрах постановленисемпе распорйаженисем. Сулйĕр ĕç нормисене, государствă çулĕсемпе вырăнти çулсем çинче çӳремели йĕркесене тата сулйĕр бригадисене йепле организацилессине кăтартса панă.

3. Вишневский „Щорс. Папанин“. Кĕнекере граждăн вăрçи геройĕ, дивизи командирĕ, „Украинăри Чапайев“ тесе асăнакан Щорс йулташ пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă. Тата Совет Сойузĕн геройĕ, „Çурçĕр полюсĕ“ станцире пăр çинче хĕль каçнă Папанин йулташ çинчен кĕскен каласа панă.

4. Стефан Приасел „Фашиссен палачĕсем судйе сĕтелли хушшинче. Ку кĕнекере тăвата хастар революционера: Альберт Кунуа—Германире, Матиас Ракошине—Венгрире, Тойво Антикайнена Финляндире тата Анна Паукера йулташсемпе пĕрле—Румынире фашиссем суд тунине, фашиссен „тĕреслĕх сучĕ“ çав тери киревсĕр, тискер ĕçсем тунине, куçкĕрет намăссăрлăхне кăтартса панă.

✪ „Чаплă çынсен пурнăçĕ“ серипе „Мичурин“, „Роберт Фултон“ кĕнекесем тухрĕç. Циолковский çинчен çырнă кĕнекене куçарса пĕтерсе пичете панă.

✪ „Тетте кĕнеке“. Чăвашиздатăн ачапăча литератури секторĕ пĕчĕк ачасем валли нумай краскăпа тунă ӳкерчĕксемлĕ, 10-шар пус тăракан питĕ пĕчĕк кĕнекесем кăларма тытăнат. Халĕ 8 кĕнеке пичетленет. Вĕсем хушшинче ачасене питĕ кăмăла килмеле йумахсем пур.

Н. Ваçанкка.

Заметкăсем тăрăх

„Казаков директорăн ирсĕр ĕçĕсем“

Йанварĕн 20-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра „Казаков директорăн ирсĕр ĕçĕсем“ йатлă заметкă пичетленсе тухнăччĕ. Йелчĕкри крахмал завод директорĕ Казаков заводра туман ĕçсем çинченех тунă тесе Крахмалтреста суйа сведенисем парса тăнă. Заводa кирлĕ йапаласем вăхăтра кӳрсе пыманнипе, завод темиçе уйăх хушши ĕçлемесĕр ларнă. Завод 1937 çулта шăннă çĕрулмипе ĕçлесе пахасăр крахмал кăларса тăнă, çулран çулах темиçе пин тенкĕлĕх убыткă курнă.

Йелчĕк райĕçтăвкомĕ Казаков ĕçĕ пирки районри прокурор уголовнăй ĕç пуçарнă, тесе пĕлтерчĕ.

„Халăх тăшманĕсене тата вĕсене хӳтеленекенсене совет шкулĕнче вырăн пулмала мар“

Шăмăршă районĕнчи Пуйанкассинчи пуçламĕш шкулта Д. Кондратйев шкул пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Хăшпĕр буржуалă-националиссене мухтаса вĕсем çинчен калаçусем иртерет. Уроксене йаланах ӳсĕр пырат. Çитменнине тата час-часах прогулсем тăват. Шкулта вĕри апат валли хăварнă çимĕçсене хăйех расхутласа пĕтерет, тесе пĕлтернĕччĕ Широкин йулташ.

„Чăваш Коммунĕ“ редакцийĕ çак заметкăна ПСК(б) Парти Шăмăршă районĕн комитетне тĕрĕслеме йаначчĕ.

Заметкă тăрăх вырăна тухса тĕрĕслесессĕн: заметкăра кăтартнисем тĕрĕс, шкул ачисене тĕрĕс воспитани паманшăн тата ытти ирсĕрлĕхсемшĕн Д. Кондратйева ĕçрен хăтарнă, тесе пĕлтерчĕ Шăмăршă ПСК(б)П райкомĕ.

„Çуракине хатĕрленмен колхоз“ заметкăра Елкин йалкор Сăкăтри „Хĕрлĕ Йалав“ колхозра (Патăрйел р-нĕ) çуракине хатĕрленме тытăнман, вăрлăхсене улăштарма, суртласси, çĕре çемçетмели тĕрлĕ минераллă имçамсене илсе килесси çинчен шутламаççĕ, йалхуçалăх машинĕсене йусаман тата авăн çапнă вăхăтра сăвăрмасăр вырттарнипе 1500 пăта йахăн ыраш çĕрни çинчен çырнăччĕ.

Ку заметкăна редакци Патăрйел районĕн çĕрĕç пайне тĕрĕслеме йаначчĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн, кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс пулнă. Айăплă çынсене ответ тыттарассипе суд аллине панă.

„Хулиган Игнатйев“

Трак районĕнчи Кайри Трак йал çынни Игнатйев С. йалта хулиганла ĕçсем тăват. Хăйсен йалĕнчи Павлов И. патне пырса кантăкне çĕмĕрсе пӳртне кĕрсе пуртăпа касма тăнă, тесе пĕлтерчĕ Петров йулташ.

„Чăваш Коммунĕ“ редакцийĕ заметкăна Трак районĕн милици уйрăмне тĕрĕслеме йанă. Заметкăри фактсем тĕрĕс, Игнатйева УК 74-мĕш статйин иккĕмĕш пайĕпе айăпласа уголовла ĕç пуçарнă.

Выставкăна хутшăнма

ТУРХАН. Иртнĕ çул Йӳç-Шăхалĕнчи Литвинов йачĕпе тăракан колхоз гектартан вăтам шутпа 32 центнер вир, Атăкри „Авангард“ колхоз 26 центнер сĕлĕ, Каншелĕнчи „Большевик“ колхоз 26 центнер ыраш туса илнĕ.

Халь çак колхозсем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хутшăнма зайавкă панă.

Ваç. Алтай.

Илемлĕ калавсемпе новеллăсен конкурсĕн итогĕсем

Çамрăк писателсен литературăри пултарулăх ӳсĕмне палăртас майпа, Чăваш совет писателĕсен правленийĕ иртнĕ кĕркунне илемлĕ калавсемпе новеллăсен конкурсне пуçласа йаначчĕ.

Çак кунсенче конкурс комиççийĕ (Елкер С.В., Уйăп Мишши, Ĕçхел) конкурса килнĕ произведенисене пăхса тухса, вĕсем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Конкурс çинчен чăваш совет писателĕсен правленийĕ çителĕклĕ хыпар сарайман пулин те, тата конкурсăн срукĕ кĕске пулнă пулин те, унта пурĕ 28 автăртан 41 произведени—калавсемпе новеллăсем пухăннă. Конкурса тăратнă произведенисем хăйсен тематики тăрăх пайанхи пурнăçăн пур хĕрӳлĕ ыйтăвĕсене те ытамласа илеççĕ. Вĕсем совет çĕршывĕн социалисăмла строителстви çинчен, культурăлăхпа халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем çинчен, совет чиккисене сыхлакан çамрăксем хăйсен çĕршывне йуратса, уншăн пĕтĕм пурнăçне пама хатĕрри çинчен тата ыт. çинчен те калаççĕ.

Произведенисене çыракансем пуринчен ытла çамрăксем тата йулашки çулсенче тин çырма пуçланисем шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче: учителсем, студентсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, летчиксем, колхозниксем тата ыт. те пур.

Конкурс тĕрлĕ çĕрте тата тĕрлĕ ĕçре пурăнакан чăваш çамрăкĕсем хăйсен тăван чĕлхипе çырнă литературине йуратнине, вĕсем ăна вăйлатасшăн тăрăшса ку ĕçе хăйсем тимлĕн хутшăннине кăтартса парат.

Произведенисем хушшинче тематикă йенĕпе çителĕклĕн майлаштарса çырнă, идеологи тĕлĕшпе çирĕп те аван шутланакан паха калавсемпе новеллăсем пур. Анчах та çак произведенисемех, художествăлăхпа чĕлхе йенчен илсе пăхсан, пурте пекех çитменлĕх-кăлтăксенчен те хăтăлса çитеймен-ха. Урăхла калаан, произведенисен художествăлă пахалăхĕ çителĕклĕ мар.

Конкурс комиççийĕ конкурса тăратнă произведенисем тăрăх пĕрремĕш премийе никама та памарĕ.

Иккĕмĕш премин (300 тенкĕ) пĕр произведени тăрăх, „Тăшман“ йатлă калав авторне—М. Н. Данилов-Чалдуна (девизĕ—„Çăлтăр“) памалла турĕ.

Виççĕмĕш премин (200 тенкĕ)—пилĕк произведени тăрăх: 1) „Шурă Розă“ новеллă авторне—И. С. Тукташа; 2) „Картус“ калав авторне А. Ф. Филиппова (Вăрнар); 3) „Комбриг калаçа пани“ калав авторне—Б. В. Шашкова (Белорус çар округĕ); 4) „Унăн тусĕ“ новелла авторне—А. Ф. Медведева (Шупашкар) тата 5) „Çĕнĕ пурнăçшăн“ калав авторне Ф. Андрейева (Çĕрпӳ) памала турĕ.

Кусемсĕр пуçне тата пилĕк произведенийе комиççи премилеме çĕр хăварса, пичете кĕртсе усă курма майĕ пур тесе палăртрĕ. Вăл произведенисем: Н. К. Йанкас новелли—„Хисеплĕ вилĕм“; Митта Пĕтĕрĕ новелли „Хĕр тантăш“; А. Лазарева—пилот калавĕ (вăл Дон-çи Ростов облаçĕнче пурăнат)—„Тĕттĕмрен — çутта“ тата Суворов Гриши (Хучаш, Йетĕрне районĕ) çырнă „Мĕн тумала?“ калав.

Çаксемпе пĕрлех хăшпĕр авторсен творчества пултарулăхĕ чылай ӳссе пынине палăртна. Ун пеккисем: „Çĕмĕрт çеçки çурăлсан“ авторĕ Романов (чăвашиздат); „Йугă çын“ авторĕ—Илпек (Шепетовка, УССР); „Чапук йурри“ авторĕ Йаратай Ç. (Шахасан р-нĕ); „Вăхат, Васка!“ авторе—Давыдов (Мускав) тата „Хуралта“ авторе—К. Микулин шутланаççĕ.

Елкер С.

Кĕскен

ИЕТĔРНЕ. Районра ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн 1-мĕш Çеççи решенийĕсене вĕреннĕ май, йединоличниксем колхоза кĕреççĕ. Февралĕн 10-мĕшне районра 15 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Вăл шутран: Кăташри „Пионер“ колхоза—6 хуçалăх, Вăрманкас Асламасри „Трудись“ колхоза—3 хуçалăх, Мăн-Шемертенри „Заветы Ленина“ колхоза—4 хуçалăх тата Мăн-Чуфашри „Прогресс“ колхоза—2 хуçалăх кĕнĕ.

Районра колхоза кĕресеп сарăлсах пырат.

Мих. Дмитрийев.

ÇĔРПӲ. Февралĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа „Ленин в Октябре“ кинокартинă пырат. Кинокартинăна курма хулари халăхсăр пуçне таврари йалсенчи колхозниксем автомашинăсемпе, лашасемпе пыраççĕ.

— Хамăрăн тăван Илйича килсе курасах терĕмĕр,—тет „Çĕнĕ пурнăç“ колхозран пынă колхозница-стахановка, 81 çулхи Йелизавета Петрова.

М-в.

ТРАК. Кушар Йунтапари Каганович йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи драмкружок пит аван ĕçлет. Кăçал вăл колхозниксене „Улттăшĕ те йуратнисем“, „Тăшман сывăрмасть“, „Йуратури прорыв“ тата „Айдар“ пйесăсене лартса пачĕ. Сывăхри йалсене кайса пилĕк спектакль лартнă. Драмкружока Николайев йулташ йертсе пырат.

Т. Сидорцов.

Чăвашсен академи театрĕ канашра

Чăвашсен государствă Академи Театрĕ хăй 20 çул тултарнă йачĕпе иртекен вунăкулăхра Канашри вагонсем йусакан завода килсе икĕ спектакль лартса пачĕ.

Февралĕн 14-мĕшĕнче театр А. Н. Островскин „Бедность не порок“ пйесине лартрĕ. Ку пйесă куракансене кăмăла кайрĕ. Артиссем хăйсен ролĕсене пысăк маçтăрлăхпа выляр ĕç.

Февралĕн 15-мĕшĕнче театр вырăссен аслă писателĕ М. Горькин çырнă „Тĕпĕнче“ пйесăна лартса пачĕ. Режиççорĕ—Е. А. Токмаков. Ку пйесăна лартни театрăн 20 çулхи çĕнтерĕвĕсене кăтартни пулат, тесен нимĕнле йăнăш та пулас çук. Кунтан артиссем хăйсен пултарулăхĕсене ӳстерессишĕн тăрăшни аванах курăнат.

Трактористсем курсĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Февралĕн 5-мĕшĕнче Новинск салинче трактористсен курсĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Курсра 70 çын вĕренет. Вĕсем пурте уй-хир ударникĕсемпе стахановецсем.

Курсантсем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса вĕренеççĕ.

В. Сидйаков.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче
Февралĕн 22-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
ЛАВРЕНЕВ
„РАЗЛОМ“
(4 пайлă)
Режиççор С. С. Мартăгин лартат.
Художник Йе Н Сапожников
Балетмейстер М Д Йаницкайа.
Талон № 16

Çĕрпӳри кайăк-кĕшĕк ĕрчетекен ИНКУБАТОР СТАНЦИЙНЕ
Механик васкавлă КИРЛĔ.
Хватер пур.
Адрес: Çĕрпӳ хули, кайăк-кĕшĕк ĕрчетекен инкубатор станцийĕ.

Шупашкарти Гидрологи партине
Вăтам пĕлӳлĕ
Инженерсемпе техниксем
КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Çак адреспа пымала: Шупашкар хули Атăл хĕри, ОСВОД çурчĕ, № 1—53.
2—1

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмелли хакĕ: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 93. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500. 25—94 см 1—3 п. л.